**Микул ИШИМБАЙ**

# Тӑрачул

**Повесть**

*Чӑваш халӑх ӑсчахне –*
*Исаак Иванович Никитина – халаллатӑп*

## Ум сӑмах вырӑнне

Илемлӗ ҫӗрте вырнаҫнӑ пирӗн ял. Пӗр енчен сӗм вӑрман хупласа ларать ӑна, ял ҫуммипех вӑрманти ҫӑлран йӑл илекен ҫырма юхса выртать. Ҫырма варӗн ик енӗпе, эп астӑвасса, ҫаранччӗ. Курӑк чӗркуҫҫи ҫӳллӗшех ӳсетчӗ унта. Колхоз валли ҫулмалӑх та, ял ҫыннисем валли те ҫитетчӗ. Халь ҫук ӗнтӗ вӑл улӑх. Ҫыр-вара ялтан пӗр ҫухрӑм ҫурӑ аяларах пӗвеленӗ те, лаппипех шыв пуснӑ. Пӗве ҫыранӗсенче ҫулмалӑх курӑк ӳсмест, ҫавӑнпа ҫӑвӗпех кӗтӳ ҫӳрет. Ҫумӑрлӑ ҫулсенче ӑҫта ан пӑх – ҫерем кӑмпи карталанса ӳсет. Уй-хирсем тикӗс те хура тӑпраллӑ пирӗн енче. Ялӑн сулахай енче кӑна ту-сӑртлӑ вырӑн. Пӑхатӑн та ҫак тавралӑха сӑнаса: "Пирӗн мӑн асаттесем ҫак илемлӗ вырӑна ахальтен куҫса ларман пуль", – текен шухӑш пуҫа килсе кӗрет. Ваттисем каланӑ тӑрӑх, хальхи ял вырӑнӗнче вӑрман кашласа ларнӑ. Ҫирӗммӗш ӗмӗрӗн ҫирӗммӗш ҫулӗсенче ҫӗр хӗсӗкрех пулнӑран Меселпуҫ чӑвашӗсем вӑрман кӑкласа куҫса ларнӑ кунта. "Ҫӳлти палчӑ", "Каран елга", "Кызыл яр" текен вырӑнсене кам ят панӑ-ши тата?

Меселпуҫӗнчи Исаак Иванч таврапӗлӳҫӗ йӗркелесе-пӑхса пурӑнакан шкул музейӗнче пиншер ҫулхи экспонатсем упранаҫҫӗ. Унтах хӗрарӑмӑн чул кӳлепи те пур. Сосновка ялӗ хыҫӗнчи тӳпемсенчен пӗринче ларатчӗ вӑл хам астӑвасса. Хальхинче яла таврӑнсан музее кӗрсе тухас терӗм. Ҫав авалхи чул кӳлепи кӑсӑклантарчӗ мана. Пӑхрӑм: музей хуҫи те ватӑлса, хытканланса кайнӑ пек туйӑнать. Вӑрахранпа тӗл пулманран ҫапла-ши?

– Э-эй, ку хӗрарӑм кӳлепин историйӗ пит кӑсӑк, – куҫне хӗсерех пӑхса калаҫма пуҫлать Исаак Иванч. – Пирӗн эрӑченхи пиллӗкмӗш ӗмӗртех ӑсталанӑ ӑна. Вӑл вӑхӑтра мӗн-мӗн пулса

иртнине халь кам пĕлтĕр ĕнтĕ? Халăхра вара легенда упранса юлнă. Çав легенда тĕрĕс пулнине ĕнентерекен тĕслĕхсем сахал мар. Мăклă кулккапа Çӳлти палчă çывăхĕсенче шурлăх çĕр тăпринчен йывăç кăмрăкĕпе тимĕр шăратнă кăмакасен ишĕлчĕкĕсене чавса кăлартăмăр. Кăсăр пӳлекри юманлăх хĕрринче Улăп тăприсем юлнă. Çак чул кӳлепе, Тăрачул теççĕ ăна халăхра, хальхи Сосновка ялĕн çывăхĕнчи Улăп тăпри çинче ларнă та ĕнтĕ. Ăна эс ху та астăватăн пуль-ха. Сармат текен халăх йăхĕ пуранна кунта. Пирĕн эрăчченхи пиллĕкмĕш ĕмĕртех тимĕр шăратма пĕлнĕ халăх – пысăк культурăллă, самай аталаннă халăх пулнă. Шырав ĕçĕсене ирттернĕ чухне археологсем çĕр пӳртсен вырăнĕсене, выльăх-чĕрлĕхпе пулă шăммисене, тăмран тунă тĕрлĕ савăт-сапа тупрĕç. Çĕр пӳртсенче пуранна халăх вырăнтан вырăна куçса çӳремен. Вăл вăхăтра та вăрçă-харçăсăр пулман. Ытларах чух çĕршĕн, пурлăхшăн вăрçнă. Çакна сарматсем хыççăн юлнă Улăп тăприсем çирĕплетеççĕ. Çав вăрçăсене пулах халăх саланса кайма е ытти халăхсемпе хутшăнса çĕр çинчен çухалма пултарнă. Акпаттăрпа Илем çинчен калакан легенда шăп çав вăхăта сăнласа парать те ĕнтĕ.

– Исаак Иванч, каласа парăр-ха çав легендăна, – ыйтатăп тӳсеймесĕр.

– Ăна каярах каласа парăп. Утмăл тăхăр çул каялла пĕр Улăп тĕмине чавса уçни çинчен каласа парам малтан, – пукан çине ларма сĕнет музей хуçи.

Тахçан-тахçан авал пулса иртнĕ ĕçсем куç умне чĕррĕн тухса тăраççĕ...

## I. Утмăл тăхăр çул каялла

Çуллахи хĕвеллĕ ир. Кун тин пуçланнă пулсан та, ирех пăчăхтарса тăрать. Кăнтăр çитеспе шăрăх пуласси халех паллă. Пĕлĕт татăкĕ те çук, иçмасса! Тепĕр çур уйăх çумăр çумасан тырă ăнса пуласне ан та кĕт. Пĕлтĕр çуркуннеренпех пĕр тумлам çĕре ӳкмерĕ. Мĕн акни чĕркуççи çӳллĕш кăна ӳсрĕ. Ăна та путлĕн пуçтарса илсе пулмарĕ, вырма вăхăчĕ çитсен çанталăк çумăра кайрĕ. Пухнă пек тырра пĕтĕмпех хыснана пачĕç вара колхозниксем. Хăйсен пӳлмисем пушăллах тăрса юлчĕç. Сантăр старик ял ачисене пухса çерçи чӳкĕ ирттернин те усси пулмарĕ. "Тăрачула чӳклесе ирттермелле", – терĕç ялти хĕрарăмсем. Пĕр кĕçнерникун кил çăнăхĕнчен икерчĕ пĕçерсе, пир сумкисене çу-çăмарта чиксе Кăсăр пӳлекне кайрĕç. Çак ятпа ялти ватă Ухвине карчăк патĕнче хăмла сăри те вĕретсе хатĕрлерĕç. Çитрĕç Тăрачул патне тулли шыв витрисемпе. Килнĕ çичĕ хĕрарăмран виççĕшĕ курăк-чечек татма çывăхри вăрмана утрĕç. Тăрачул айккинерех пир татăкĕ сарса илсе килнĕ апат-çимĕçе кăларса хучĕç.

Пуç тăрринчех тăрисем юрă шăратса ташă тĕрлеççĕ. Путене пучахланнă пур-çук тыр-пулшăн савăнса мухтав юрри кĕвĕлет. Сукмак хĕрринчи утмăлтурат чечекĕсем те кăвак тӳпене иленнĕ. Ыраш пусси çинче ăрша ташлать. Вăштăр çил ачи те ыраш шăркисене астарса вĕçтересшĕн чупать.

Савăнать, пĕтĕçленет çутçанталăк. Çакна курнă çын та чунĕпе ырăланать, тĕнчен уйрăлми пайне çаврăнать. Çĕр ĕçченĕн савăнăçĕ самантлăха кăна çав. Çĕрпе хуçалăх ĕçĕсемех канăç памаççĕ ăна ытларах чухне.

Акă, хĕрарăмсем вăрмантан таврăнчĕç. Тăрачула шыв яра-яра чечек-курăкпа сăтăрса якатрĕç, çум курăкран тасатрĕç. Апăс тивĕçне туса пыракан Ухвине карчăк чӳклеме пуçласан пурте хĕвел тухăç енне чĕркуçленсе ларчĕç.

– Эй, ырă Пӳлĕх! Пирĕн чӳке йышăнсам. Çĕр пек кăпăшка икерчĕпе, шур пĕлĕт пек çăмартапа, хăмлаллă сăрапа чӳк тăватпăр. Çуккине пур ту, çитменнине çитер. Пире тыр-пулсăр ан хăвар. Çырлах пире!

– Эй, çумăр çутаракан Ырă! Иплĕ-сиплĕ çумăрсăр ан хăвар пире. Акнă тырра усал çумăр ярса ан çĕмĕр. Мĕн ӳснинчен ытлăн-çитлĕн усă курма пар. Çырлах пире!

– Эй, сăваплă Илем! Пире ан пăрахсам. Акнă тыррăмăра пăхса-асăрхаса тăр. Хĕн-хур ан яр. Эпир сана асăнсах тăрăпăр, эс пире ан асăн. Чӳк, çырлах! Чӳк, çырлах! Чӳк, çырлах!

Чӳк пуçĕ икерчĕ таткисене кашнинех тыттарса тухрĕ, çăмарта салатса пачĕ, сăра сыптарчĕ. Кун хыççăн кĕллине малалла тăсрĕ:

– Паçăр пĕтĕмпеччĕ, халь ал валлĕн асăнатпăр. Эпир çитерейменнине ал валĕ çитертĕр. Çырлахăр, савса панине савса илĕр, кĕллĕмĕре хапăл тăвăр, – хĕвел тухăç енне виç хут пуç тайрĕ Ухвине карчăк.

Апатланнă хыççăн юлнине таткаласа унтах хурса хăварчĕç.

Тухтăр Микулайĕ паян-ыран тенĕ пек утта тухас ĕмĕтпе пурăнать. Улăхсенчи курăк шăрăха пула типсе ларчĕ пулсан та, вăрманти уçланкăсенче çава витмелĕх пур-ха. Колхоз выльăх-чĕрлĕхĕ аптăрас çук, Мăкшă тĕпекĕпе Çӳлти палчăра курăк чиперех ӳснĕ. Колхоз валли утă-курăм хатĕрлемесĕр хăй валли çулма аван марри кăна ал-урана çыхса тăрать. Мĕн колхоз йĕркеленнĕренпех ял çыннисем пăхăнса пурăнакан çырман саккун ку. Çависене те туптасах хунă Тухтăр Микулайĕ: утта тухма тивсен çын умĕнче намăс курмалла ан пултăр тесе тăрăшать.

Кил хуçи паян килĕнче пĕчченех. Ик ывăлĕ ирхинех атма йăтса пулла кайрĕç. Çуллахи вăхăтра пулли те апат-ха. Ăшаласа çиме те, шӳрпе пĕçерме те пулать унран. Ытти хĕрарăмсемпе пĕрле Тăрачула чӳклеме кайрĕ арăмĕ. Тухтăр Микулайĕ кун пек йăла-йĕркесене пит пăхăнсах пурăнакан çын мар. Мăнкун, Çимĕк е кĕркунне ваттисене асăннă вăхăтсенче кăна ратни-тăванĕсемпе хутшăнса паллă тукалать. Арăмĕ тĕшмĕшлĕрех çын та, мĕн тăвăн кун пек чухне? Арăмĕн ĕç-пуçне хирĕçлес кăмăлĕ çук-ха унăн.

– Микулай, паян хĕрарăмсем чӳк тума каяççĕ. Юрать-и кайма? – ыйтрĕ вăл ирхине.

– Кай, каях, – алă сулчĕ Тухтăр Микулайĕ. – Эсир чӳкленин усси пулĕ-ши вара? Пĕлтĕр ватсупнă Сантăр ачасемпе çерçи чӳкĕ ирттерсе аппаланчĕ.

Çумăрĕ çавах çумарĕ, – арăмне куç хĕррипе пăхса лĕх-лĕх кулчĕ упăшки.

Хирĕç сăмах хушмарĕ Марине. Пĕçерсе хатĕрленĕ çăмартипе икерчине алшăллипе чĕркесе карçинккине хучĕ те шăппăн тухса кайрĕ.

Крыльца çинче ларса юлнă Микулай шухăша кайрĕ. Колхоза кĕнĕренпе лăш курмасăр ĕçлет – ури çине тăраймарĕ. Ик лашипе ĕнине, ака-суха хатĕрĕсене колхоза кĕнĕ чухне пачĕ. Пурте пĕр тан пулмалла теççĕ те-ха унта. Иккĕленет кун пирки Микулай. Сăмахран, Чирви Петĕрĕпе Серте Иванĕ тайлăк-тайлăк пӳрчĕсемсĕр пуçне нимле хуралтă лартайман. Серте пек кахал çын тĕнчере те çук-тăр. Хĕлле ял тăрăх сулланса çӳрет, çулла, халăх тар тăкса ĕçленĕ вăхăтра – путене пек сулхăнра. Ĕмĕр тăршшĕпе ял çинче ыйткаласа çӳресе пурăнчĕ. Чирви Петĕрĕ тесен, пĕртен-пĕр сурăхĕпе ĕнине картла выляса ячĕ. Иккĕшĕ те хăйсене "акчивистсем" теççĕ халь. Колхоз йĕркеленĕ вăхăтра хĕрлĕ пустав сулласа: "Талуй пуянсене!" – тесе ял тăрăх кăшкăрашса çӳресе халăха пăтратрĕç. Вулăсран çав "пуянсене" тупса палăртма килнĕ виçĕ çынна та çавсемех ертсе çӳрерĕç. Тивĕçсĕррисемех шар курчĕç ун чухне. Ваçли Уçăпне, вĕлле хурчĕ тытса пурăнакан вăтам хресчене, çемйипех килĕнчен хăваласа кăларчĕç. Пурлăхĕн пĕр пайне лавсем çине тиесе вулăса ăсатрĕç. Пӳрчĕ, хурт-хăмăрĕпе пур пек выльăхĕ колхоз аллине куçрĕ. Панкух Çеркейĕ пурлăхне парасшăн пулман тет-и çав, ăна урапа çине çыхса пăрахсах тĕрмене ăсатрĕç. Иккĕш те тарçă твраш тытса пурăнман, хăйсен ĕçченлĕхĕпе ураланса кайнă хресченсем. Апла пулсан ăçта кунта тĕрĕслĕх? Çакă пуç ваттарать те Микулана. Пурпĕр шăла çыртма тивет. Панкух Çеркейĕн хутне кĕрсе çăвар уçнă та Хура Ваççа, милицисем килсе тытса та кайрĕç. Ним çукшăн çур çула яхăн тĕрмере шараçланчĕ хайхи, кун хыççăн тин, типĕтнĕ пулă пек пулса кайнăскер, килне сĕтĕрĕнсе таврăнчĕ. Вăт çынна шан хальхи саманара!

Çуркуннехи пĕр каç Серте Иванĕ килсе кĕчĕ. Сталинпа колхоз çинчен мĕн шутланине тĕпчесе пĕлесшĕн чакаланчĕ. Çаксер мĕн шутпа лăкăртатса ларнине сиснĕ Микулай:

– Эп тĕттĕм çын. Ун пек-кун пеккине чухласах каймастăп çав, – тесе хучĕ.

Çакăн хыççăн тин хăпрĕ лешĕ, урăх килесси-тăвасси пулмарĕ.

Микулай шухăша кайса ларнă вăхăтра урам урлă пурăнакан Хура Ваçук килсе кĕчĕ. Тухтăр Микулайĕ пек вăтăр урлă каçнă, самаях çӳллĕ те типшĕм кевтеллĕ çын вăл. Çемйи пысăк унăн. Ашшĕ-амăшĕ, виçĕ хĕрĕпе ик ывăлĕ тăват кĕтеслĕ пӳртре хĕсĕнсе пурăнаççĕ. Арăмĕпе иккĕш колхозра çĕрнекунне пĕлмесĕр тăрăшаççĕ – юрлă пурнăç пурпĕр хăпмасть.

– Ĕç пуртан килнĕччĕ-ха сан пата, Микулай, – крыльца çине çумлăн ларчĕ хайхи. – Пĕр ĕçлĕ сĕнӳ пур.

– Мĕнле ĕçлĕ сĕнӳ вăл сан? – Ваçук çине куларах пăхрĕ Микулай.

– Эс те ман пек вĕçне-пуçне çыхăнтараймасăр пурăнакан çын. Çавăнпа çын çине сăмах-юмах кăларас çук. Пĕлетне, пĕр шухăш килсе кĕчĕ-ха пуçа.

– Эс пуç çавăрса ан лар. Тӳрех кала: вăрă-хураха кайма чĕнместĕн пуль?

– Пиртен мĕн вăрă-хурахĕ? Çыннăн улăм пĕрчине те киле илсе таврăнман хальччен. Ĕçĕ урăхлараххи-ха манăн. Çеркей шкултан пĕр хаçат илсе килнĕ ĕнер. Хе-хе, такам панă ĕнтĕ ăна. Çав хаçатра, ĕçĕ ăçта пулнине астумастăп та, пĕр Улăп тăприне чавса уçни çинчен çырнă. Пирĕн ял хыçĕнчи пеккине ĕнтĕ. Вăт, çавăн айĕнчен пĕр купа ылтăн-кĕмĕл чавса кăларнă тет. Пирĕн те хамăрăннинчен пĕрне чавса пăхмалла мар-ши? Тем тесен те хальччен курман пурлăх чикнĕ унта. Пĕр пилĕк-ултă çын пулсан ирлĕ-каçлă чавма та пултарăттăмăр. Колхозра та халь пысăк ĕçсемех çук.

– Пире валли ылтăн-кĕмĕл хатĕрлесе хунах-ши вара унта? Виле шăтăкне уçни çылăх та...

– Пăхăр саманинчи япалашăн мĕн çылăхĕ пултăр? Унта çын пытарнă пулсан та, хальччен шăмми-шакки çĕрсе тăпрана çаврăннă пуль. Ылтăн-кĕмĕл, ху пĕлен, пиншер çул выртсан та çĕрмест.

Микулай шухăша кайрĕ. Ылтăн-кĕмĕлĕ унта чăнласах та пулма пултарать. Мĕншĕн чавса пăхас мар? Çав мул çĕр айĕнче выртнин усси çук, чĕррисенех усă кӳме пултарать. Мĕн пулать-килет...

– Юрĕ, Ваçук, тата тăват-пилĕк çын тупса калаçса килĕш, эппин. Асту, шанчăклисем пулччăр тульккă. Калăпăр: Пĕчĕк Уртемее, Тихăн Картпа Микулайне, Арçинтипе Кирука шанма пулать. Вĕсем чĕлхисене çыртма пĕлеççĕ. Кун çинчен хăйсене те асăрхаттар. Каçпа, хĕвел ансан, лумсемпе кĕреçесем илсе пĕчĕкрех тӳпем çине пыччăр.

Кĕтӳ анас умĕн кĕреçине хул хушшине хĕстернĕ Тухтăр Микулайĕ пахча хыçне тухрĕ, ун-кун пăхкаласа çын курăнманнине ĕненсен тин çумлă вĕтлĕхе утрĕ. Вăл çитнĕ çĕре кирлĕ çынсем пурте пуçтарăннăччĕ ĕнтĕ, Микулая кăна кĕтсе ларатчĕç...

– Вăхăт ирттерсе тăрар мар, ĕçе тытăнар, – терĕ Хура Ваçук.

Çĕр тӳпине сӳс кантрапа виçсе варрине палăртрĕç, ик аршăнлă тăваткал туса чавма пуçларĕç. Акшар чуллă çĕре чавма çăмăл мар. Тăватшарăн улшăнса, тем пек тăрăшсан та шурăмпуç киличчен хăлаç тарăнăш кăна чавайрĕç. Çын курасран хăранипе ĕç хатĕрĕсене вăрманта пытарса уйрăмшарăн килĕсене саланчĕç, каçхине каллех çакăнта пухăнма калаçса килĕшрĕç.

Йĕпе çине сапа тенĕ пекех шăши çумăрĕ çуса тăчĕ иртенпех. Тупра шыракансене çакă савăнтарчĕ кăна-ха: кун пек çанталăкра Улăп тĕми çывăхĕнче иртен-çӳрен пулас çук. Çавăнпа вăхăта çухатмарĕç арçынсем, кăнтăрлапа вырăна çитсе ĕçе тытăнчĕç. Каç çитнĕ çĕре тӳпем варрине ик метра яхăн чавса кĕчĕç пулсан та кĕтнĕ тупра тупăнмарĕ.

– Ну, ăçта санăн ылтăн-кĕмĕлӳ? – Хура Ваççа çине кăн-н! пăхрĕ лумне тăрăнтарса лартса Тихăн Микулайĕ. – Çӳрен вĕт пуç çавăрса! Мĕн ылтăнĕ пултăр кунта? Кайса лаша кӳлсе кил. Чавса кăларнă пурлăха çĕклесе каяймăпăр тата!

Сăмах чĕнмерĕ Ваçук. Шăтăка сиксе анса чул пек хытса ларнă çĕре хайăрма тытăнчĕ лумĕпе. Кăштахран лум чула перĕнсе чанклатрĕ. Тата икĕ-виçĕ çĕре тĕрĕслерĕ – пур çĕрте те чул. Кĕреçе кĕнĕ таран чавса тĕрĕслеме шут тытрĕç арçынсем. Юлашкинчен çакă паллă пулчĕ: аялта талккăшĕпех чул плита выртать. Çакă чавакансене çĕклентерсех ячĕ.

– Акă, тĕпне çитрĕмĕр те. Атту "Ăçта сан ылтăн-кĕмĕлӳ?" тесе найкăшан! – кăррăн пăхрĕ Тихăн Микулайĕ çине Хура Ваçук. – Ку чул айĕнче мĕн те пулсан пурах. Каларĕ тесе калăр...

Шит хулăнăш, ик аршăн анлăш-урлăшлă чул плитана çĕклесе уçасси çăмăл пулмарĕ. Лумсемпе хире-хире аран вырăнтан хускатрĕç хайхине, шăтăкрах хăяккăн тăратса хучĕç. Плитан айккисене акшар чул купаласа çур метр ытла хăпартнă, аял енĕ те пĕтĕмпех чултан. Чăн-чăн чул кистен пек. Шалта – çумлăн пытарнă ик çын шăмми-шакки.

– Арçынпа хĕрарăм шăммисем, – пĕтĕмлетӳ турĕ ăна-кăна чухлакан Тухтăр Микулайĕ.

Мул шыракансем ирĕксĕрех сăхсăхса илчĕç, хăш-пĕрисем шăтăкран сиксе тухма та ĕлкĕрчĕç. Арçыннăн сылтăм енче хĕç, сулахайра кинжал пекки выртаççĕ. Хĕрарăм çумĕнче те кĕске хĕç.

– Мĕн ылтăнĕ пултăр кунта? Ваçук сăмахне итлесе Çĕпĕр шăтăкне кĕрсе кайăн, – мăкăртатрĕ Уртемей.

– Ха, паттăр тупăннă! Эс ху малтан шала кĕрсе кăтарт-ха эппин!

– Сăмах çапма ăста вăл. Ун пек-кун пек пулсанах айккине тарать, – йĕкĕлтерĕç ыттисем.

Уртемей сăмах вакласа тăмарĕ, хĕрес хурса илчĕ те плита енчен шала кĕчĕ, шăмăсен умне пĕшкĕнчĕ.

– Хĕç-кинжалĕсене кунта пар! – хушрĕ Хура Ваçук.

– Чимĕр, атьсемри, кусен пӳрнисенче çĕрĕсем пур, сулă та, – пĕлтерчĕ çак вăхăтра Уртемей.

Пурте кĕпĕрленсе шала кĕчĕç. Тухтăр Микулайĕпе Хура Ваçук виле кĕлеткесен пӳрнисенчен ултă çĕрĕпе сулă хывса илчĕç. Ваçук тупнă япаласене кĕпе аркипе сăтăркаласа тасатрĕ те:

– Сулли кĕмĕл, çĕррисем ылтăнран, – тесе пĕтĕмлетӳ турĕ.

Хĕрарăм кĕлеткин пуç купташки патĕнче тата ик хăлха алки тупăнчĕ. Кусем те, темле кайăк хурмă ăсталанăскерсем, ылтăнран пулчĕç. Çак япаласемсĕр пуçне урăх тупра тавраш тупăнмарĕ.

Шăтăкран тухса курăк çине ларчĕç арçынсем. Пурне те тупнă япаласем кăсăклантарчĕç, пурте вĕсене тытса курма кармашрĕ.

– Чимĕр, кинжалĕ ăçта кĕрсе кайнă? Санра-и, Уртемей? – ыйтрĕ Хура Ваçук алăран алла çӳренĕ япаласем пĕр çĕре пухăнсан.

– Манра. Килте выльăх пусма çĕçĕ çук. Шăп шай мана кирлĕ япалаччĕха ку.

– Кăларса хур çакăнта! Иш-ти, кинжал кирлĕ ăна! – шурă куçне кăларчĕ Тухтăр Микулайĕ.

– Хам тупнă япалана ма сире памалла ман? Шăтăка хăйсем кĕресшĕн пулмарĕç, – мăкăртатрĕ Уртемей.

– Кăларса хур тенĕ сана! Е халех пыршу-аршуна кумса пăрахап! – Уртемее кăкăртан ярса илчĕ Арçинти.

– Эй-эй, чарăнăр! Пуршăн-çукшăн шав кăларас мар. Луччă çак тупнă япаласемпе мĕн тумалли çинчен канашлар, – хирĕç-тăрăва хутшăнчĕ ватă Тихăн Карт. Уртемейĕн пиншак çаннинчен кинжала кăларса илчĕ. Вăрах вăхăт тавлашнă хыççăн çапла пĕтĕмлетӳ турĕç: çĕррисемпе хăлха алкине хăйсем хушшинче пайласа илмелле, хĕçсемпе кинжала тата сулла Çтерлĕри таврапĕлӳ музейне леçсе памалла. Ыран хулана вут сутма каякан Хура Ваçукпа Тихăн Микулайне шанчĕç çак ĕçе, япалисене вырăна çитернине ĕнентерекен хут илсе килме хушрĕç. Улăп тăприне чавса уçнипе ытти тупнă япаласем çинчен çăвар уçмалла мар. Ыйтас-тăвас пулсан, илсе килнĕ япаласене тăм шăтăкĕнче тупрăмăр тесе каламалла терĕç. Виле шăтăкне çĕнĕрен плитипе витсе çĕр купаларĕç, Тăрачула та вырăнне тăратса хăварчĕç.

## II. Сармат çĕрĕ – пуян çĕр

Талккăшĕпех – сĕм вăрман. Вĕçĕ-хĕрри курăнмасть. Çын кĕрсен тухмалла мар чăтлăхсенче тĕрлĕ тискер кайăк кун кунлать. Акă пакша туратран турат çине сике-сике апат шырать. Лапсăркка хыр тăрне пĕр пусăм пăчăр сырăннă. Айккинчен пăхсан, хускалмасăр лараканскерсем кайăк йăвисем пекех курăнаççĕ. Янкăр уяр тӳпере ăмăрткайăк ярăнса вĕçни курăнчĕ. Аялаллах анса пырать çăткăн кайăк. Акă чăтлăхра чакак чакăртатни таврари шăплăха татрĕ. Шĕшкĕ çинчи пакша мăйăрне пăрахсах вĕтлĕхе тарчĕ. Кайăксем те юрлама пăрахрĕç пĕр вăхăта. Пăчăр пусăмĕ хушшинче те канăçсăрлăх. Ăмăрткайăка асăрхарĕç-ши, е чакак çуйхашни хăратрĕ – самантрах вырăнтан çĕкленсе вĕтлĕхри пилĕк таран ӳснĕ курăк ăшне чăмрĕç. Туп вĕсене унта! Ват юман тăрринче ларакан çăхан кăна апатсăр юлнăшăн пăшăрханса салхуллăн кранклатрĕ. Çапла, вăрманти пур чĕрчун та хăй йĕркипе пăхăнса пурăнать. Кашнинех хăйĕн тăшманĕ пур. Куянĕ тилĕрен хăрать, тилли – кашкăртан. Вăрман хуçи – упа, анчах та унран та вăйлăраххи – этем.

Урисене сарлака яра-яра пусса вăрманпа пырать Акпаттăр. Сунар хăйлипе тухнă пулсан та, вак кайăксене курман пекех утать. Акă умĕнчех куян сиккелесе пырать. Те çын хăйне тивес çуккине пĕлет – пĕртте хăрамасть. Ши-и! шăхăрчĕ çакна курнă Акпаттăр. Куян кайри урисем çине ларса ун-кун пăхкаларĕ те вак тĕмсем хушшине яртлаттарчĕ. Кайăксем юрланине итлесе пынă май Акпаттăрăн та юрласси килет. Çамрăк-ха вăл, вăтăра та çитей-

мен. Вăрăм пӳллĕ, сарлака хул-çурăмлă, çырă кăтра çӳçлĕ арçын. Вăй-хал енчен Кызыл йăхĕнче ăна çитекенни çук. Алăсемпе çавăрса илмелле мар юмансене пĕчченех хулпуççийĕ çине хурса йăтать. Сунара та пĕчченех çӳрет. Хальччен миçе упапа кашкăр тытнине хăй те астумасть. Тавçăрулăхĕпе ăс-тăнĕ те çук мар. Йăх пуçĕн паллине тивĕçлипе çакса çӳрет вăл. Йăх пуçĕ пулнăшăн кăна мар, пур ĕçре те пуçару, тĕслĕх кăтартнăшăн хисеплеççĕ ăна ăрурисем.

Çич-сакăр çул каялла кăнтăр енчи çĕрсенче пуçламăш хут пулса курчĕ Акпаттăр. Усăллине сахал мар вĕренсе килчĕ унтан. Халĕ йăх çĕрĕнчех шурлăх тăпринчен йывăç кăмрăкĕпе тимĕр шăратса кăлараççĕ. Кăмакисене кăлармалли кирпĕчсене епле хатĕрлемеллине те унтанах вĕренсе килчĕ. Шăратса кăларакан тимĕр халь ухă, сăнă йĕпписемпе хĕç, çĕçĕ-пуртă тавраш тума та, ют çĕршывсенчи халăхсенчен хăйсене кирлĕ таварпа улăштарма та çитет. Çапла, суту-илӳ ĕçĕ те çӳллĕ шайра Кызыл йăхĕнче. Тимĕрсĕр пуçне пыл, ăвăс йывăççипе сăран, кăш, шашкă, сăсар, тилĕ тирĕсем ют çĕрсене ăсансах тăраççĕ. Тырă, тĕрлĕ савăт-сапа, хуçалăхра кирлĕ ытти япаласемпе улăштараççĕ вĕсене. Кăнтăр çĕрĕнче пуçламăш хут пулнă чух тĕлĕнтермĕшсем сахал мар пулчĕç.

Аллă çын çĕр урхамахпа пуçтарăнчĕç инçе çула. Япалисене чикнĕ сăран хутаççене утсем çине тиесшĕнччĕ малтан вĕсене Акпаттăр. Кун пирки ăрури ваттисемпе канаш тытрĕ те, юлашкинчен çапла йышăнчĕç: юманран касса кăларнă урапа кустăрмисем инçе çул çӳреве юрăхлă мар, час катăлса ванса пĕтеççĕ. Ут çине тиени шанчăклăрах. Кашни юланутçа тавар тиенĕ пĕрер ут тивет, сых ятне хăйсемпе пĕр çирĕм урхамах илмелле. Инçе çулра тем те сиксе тухма пултарать. Кашнинех çар хатĕрĕ салатса пачĕ Акпаттăр. Ку та ахальтен мар. Кăнтăр енчи çеçенхирсенче вăрă-хурахсем ашкăннине пĕрре мар илтнĕ. Пĕр вунă çул каярах вăл енче çур çул ытла пурăнса килнĕ Траккана та хăйпе илчĕ Акпаттăр.Тракка вĕсен чĕлхине чухлать, улшу-илӳ ĕçĕнче чĕлхе пĕлменни пысăк чăрмав кӳме пултарать-çке-ха. Унта çитмелли çула та пĕлет вăл, аташса çӳресси çук.

Тепĕр уйăх çурăран çулçӳревçĕсем чиперех пырса кĕчĕç Тĕрпĕнт текен хулана. Хули пысăк мар, çурчĕсенчен ытларахăшне тăмран туса лартнă. Хушăран хушă чулран купаласа лартнисем те курăнкалаççĕ. Кусем – хулари ятлă-сумлă çынсемпе суту-илӳ ĕçĕпе пурăнакансен. Кунти халăх мĕн ĕçпе пурăнни, мĕн ĕçсе çинипе тумланни – веçех кăсăклантарчĕ Акпаттăра. Хула хуралĕн пуçĕ асăрхаттарнине шута илсе хан пурăнакан çурта тупмалла пулчĕ малтан. Кунта каллех ват Тракка вырăнти халăх чĕлхине пĕлни пулăшрĕ. Хан пурăнакан капмар чул çурта тупсан та самай вăхăт кĕтмелле пулчĕ. Ун патне кĕрекен-тухакан сахал мар иккен. Асăрхарĕ-ха Акпаттăр, пурте вĕсем пекех инçе çĕртен килнĕ суту-илӳ çыннисем. Тумтирĕ те тĕрлĕрен. Пĕрисем ура тупанне çитиччен вăрăм та шурă тумтирпе. Пуçĕсе-

не витнĕ шурă пĕркенчĕкĕсем çинчи кăшăлĕсем йăлтăртатса тăраççĕ. Теприсем çăмран йăваласа тунă кĕççерен çĕленĕ тумтирпе. Урисенче вăрăм кунчаллă сăран пушмак, пуçĕсене тăхăннă калпакĕсем те кĕççеренех. Хăйсен хурмă сăран тум тăхăннисем те пур. "Ха, мĕн тĕрлĕ халăх çук иккен тĕнчере!" – тĕлĕнчĕ Акпаттăр. Çак вăхăтра хан çуртне кĕме чĕнчĕç. Ăру пуçĕпе пĕрле тăвата ят-сумлă çын шала кĕрсе тăчĕç, пилĕк таран авăнса пуç тайрĕç. Хан хăйĕн çывăх çыннисемпе урайĕнче кĕççе çинче ларать. Аллипе паллă туса хирĕçле вырнаçма сĕнчĕ кĕнисене. Сăран хутаçпа кăш, сăсар, шашкă тирĕ парнелерĕç хана, унтан тин кăтартнă вырăна йышăнчĕç. Пĕринчен тепри чипер, çамрăк хĕрарăмсем çивитти çинчи апат-çимĕçе пуçтарчĕç, тулли чашăксемпе аш, хăнасем хальччен курман çимĕçсем килсе лартрĕç.

– Кусем ханăн хĕрарăмĕсем, – ăнлантарчĕ çумлăн ларакан Тракка.

Тĕлĕннĕ Акпаттăр чĕлхине çеç чаклаттарса илейрĕ. Хан вара хăнасем çине пăхса кулкаласа ларчĕ. Суту-илӳ тума Сармат çĕрĕнче мĕн-мĕн пуррипе кăсăкланчĕ, малашне татах килсе çӳреме чĕнчĕ. Калаçу вăхăтĕнче ĕçлĕ çыхăнусене татах та анлăлатма калаçса килĕшрĕç. Парнесем те пулчĕç. Хан хушнипе хăнасене пĕрер халат парнелерĕç, хутаççисене тĕрлĕ савăт-сапапа ылтăн-кĕмĕлрен тунă сулăсем, çĕрĕсемпе хăлха алкисем чикрĕç. Ку кăна та мар-ха, хан хушнипе хваттере те вырнаçтарчĕç. Хваттер хуçи хăй те суту-илӳ ĕçĕпе пурăнать иккен. Шурлăх тăпринчен тимĕр шăратса кăларать, тимĕр ăстисем унран тем тĕрлĕ япала та тăваççĕ. Тимĕрпе çыхăннă ĕçре кăна ун патĕнче ик çĕр ытла çын тăрăшать. Хĕрлĕ тăмлă хăйăртан кирпĕч туса кăларассипе те тимлет хуçа. Каласа панисене веçех хăлхине чиксе пычĕ Акпаттăр. Çывăрма выртсан та ыйхи килмерĕ.

– Итле-ха, шурлăх тăпринчен мĕнле майпа тимĕр тумалла вара? Ку хуçа улталамасть-ши пире? – ыйтрĕ çумлăн выртакан Траккаран.

– Кам пĕлет, ăна хамăр куçпа курмалла. Ун пек япаласене ют çынна кăтартмас йăли пур-ха вĕсен. Парнесем парса ӳкĕте кĕртсен кăна, – терĕ леш анасласа. – Çывăр-ха эс. Кун çинчен ыран хăйĕнпе калаçăпăр.

Тепĕр кунхине, чăнах та, хуçа аллă сăсар тирĕлле хуçалăхне кăтартма килĕшрĕ. Курасси-пĕлесси вара кирпĕч тăвакан çĕртен пуçланчĕ.

Пĕр улт-çичĕ утăм урлăшлă çаврака шăтăкра çурри çарамас арçынсем тăм çăраççĕ. Пĕç кăкĕ таран тăм ăшĕнче аран-аран уткалаççĕ хăйсем. Пĕрисем çавра савăтсемпе хăйăр, тăм, шыв йăтаççĕ, теприсем çăрса хатĕрленине чулран ăсталанă тăваткал савăтсене яраççĕ. Кăшт кушăхсан чĕрĕ кирпĕче хĕртме пысăк кăмакасене хураççĕ. Çаксене веçех астуса юлма тăрăшрĕ Акпаттăр, ăнланманнине хуçаран ыйтса пĕлчĕ. Акă çăрнă çĕре кайăк çăмартисене ватса янине курчĕ.

– Ыйт-ха, ку çăмартасене харап туса ма унта яраççĕ? – терĕ Тракkана.

– Чĕрĕ çăмарта ярса çăрнă кирпĕч çирĕп пулать. Ванмасть, шывран та,

сивĕ-вĕрирен те хăрамасть тет, – терĕ лешĕ хуçапа калаçса илнĕ хыççăн.

Çав кунхинех тимĕр шăратнă çĕрте те пулчĕç. Кирпĕчрен ăсталанă пысăк кăмакасен умĕнче купи-купипе йывăç кăмрăкĕ выртать. Çав кăмрăка кăмакана пăрахса çунтараççĕ иккен. Çиелтен типĕтнĕ шурлăх тăпри хураççĕ тата. Вăл питĕ хĕмленсе çунать-мĕн. Икшер сăран вĕркĕч пур. Вĕсемпе кăмака ăшне вĕртерсен тăпрари тимĕр шăранать те, кăмрăк айне хунă чулсем витĕр сăрхăнса тăм саватсене пухăнать. Çав тимĕртен çар хатĕрĕсемпе хуçалăхра кирлĕ тĕрлĕ япаласем тăваççĕ тимĕр ăстисем. Вĕсен ĕçĕпе те кăсăкланчĕ Акпаттăр. Уйрăмах çар хатĕрĕсем ăсталанă çĕрте вăрахчен чарăнса тăчĕ, хуçа ăнлантарнине тимлĕн итлерĕ. Пĕр çĕрте ик арçын лашан малти урине çĕкленĕ те тем шаккаççĕ.

– Кусем ма урхамаха асаплантараççĕ? – тĕлĕнчĕ çакна курнă Акпаттăр. Лешсем мĕн тунине курас тесе çывăхарах пычĕ.

Хайхи çынсем çурма ункă пек тимĕр татăкне лаша чĕрнин аял енне шĕвĕртнĕ тимĕр татăксемпе çапса лартаççĕ иккен. Çаксем мĕн тунине çийĕнчех ăнланчĕ. "Ха, тимĕр çапнă чĕрнесем çийĕнмеççĕ. Пирĕн утсем вара утаймиех пулса çитрĕç. Ăслă халăх пурăнать кунта" – шутларĕ ăшĕнче. Хăй çавăнтах хуçана çав япаласене çĕр ут валли туса пама ыйтрĕ. Куншăн лешĕ тăхăр хутаç хаклă тир ыйтрĕ. Килĕшрĕ çак хакпа Акпаттăр. Тепĕр виç кунран ыйтнине хатĕрлесе пама пулчĕ хуçа. Улшу-илӳ ăнăçлă пынăшăн савăннă Акпаттăр алă çар çыннилĕх хĕçсемпе сăнăсем, кĕске çĕçĕсемпе ухă йĕпписен пуçĕсене тепĕр вунă хутаç тирпе улăштарчĕ. Хуçа та кăмăллă юлчĕ курăнать. Каçхине хапăлласах килĕнчи таварĕсене кăтартрĕ. Хальччен курман çеçкеллĕ, витĕр курăнакан тавар тĕркемĕсем çинчен куçне те илеймерĕ Акпаттăр. Кăшт тăрарахпа хăйне килĕшнĕ тавара виç хăлаç виçсе пама ыйтрĕ. Куншăн ик чĕрес пылпа пĕр хутаç сăсар тирĕ пама тиврĕ пулсан та, улшăнупа кăмăллă юлчĕ.

– Мĕн тума кирлĕ ку сана? – тĕлĕнчĕ Тракка. – Унран, витĕр курăнаканскертен, ăшши те пулас çук.

Хирĕç ним те чĕнмерĕ лешĕ, тăлмач çине чеен пăхса тута хĕррипе кулса илчĕ кăна. Тракка та сăмах хушмарĕ, ухмаха ермен-ши ку тенĕн пăхса пуçне сулларĕ. Чи тĕлĕнмелли вара урăххинче пулчĕ-ха.

Ал лаппи пысăкăш лаптăк, сарă тĕспе йăлтăртатакан япала тыттарчĕ Акпаттăра хуçа. Хайхине ун-кун çавăркаласа пăхрĕ те лешĕ шак! хытса тăчĕ. Çаврашкаран ун çине мăйăх-сухаллă çын пăхать. Шăнкăрт! тухса ӳкрĕ аллинчен хайхи япала.

– Мĕн ку? Шалтан пăхаканни мĕнле çын? – ыйтрĕ хуçаран.

– Кĕске теççĕ ăна. Шалтан пăхаканни эс хăвах, – кулкаласа ăнлантарчĕ лешĕ.

– Хам кунтах тăрап пулсан çак пĕчĕк япала ăшне мĕнле кĕрсе ларам пулать? – хăй те хăй мар пулса кайрĕ ӳкернĕ япалана çĕклесе Акпаттăр.

– Эс ун ăшне кĕрсе ларман. Санăн сăн-питне кăна кăтартать вăл, – хайхи "кĕске" текеннине илсе хăйĕн пичĕ патне тытрĕ хуçа. – Акă, кур, халь манăн сăна кăтартать. Кам ăна хăй умне тытать – хăй сăнне курать.

Хăйĕн сăн-питне шыв çинче кашнинчех курнине халь тин аса илчĕ Акпаттăр. Сăн-пит еплереххине пăхса илни те чармасть-ха хăш чухне. Хăвпа шыв йăтса çӳрейместĕн, кăна вара çумри пĕчĕк хутаçра чиксе çӳреме пулать. Хăйне пит кирлех пулмасан, парнелесе памалли çын та çук мар-ха унăн.

– Мĕн чул тăрать вара çак тĕлĕнтермĕш?

– Э-э, кунак, хаклă япала вăл. Хĕрарăмсем уншăн тем пама та хатĕр, – кукша пуçне кăтăртаттарчĕ хуçа. – Хакĕ тесен... Пĕр вунă кăш тирĕпе улăштарма та юрать пуль.

– Кун пекки урăх пур-и? Иккĕ илетĕп.

– Ай, хаклă кунакшăн епле ан пултăр! Иккĕ мар, виççĕ-тăваттă пама хатĕр! – вĕтеленсе ӳкрĕ хуçа.

– Ку япаласем мĕн тума кирлĕ-ши тата? Мĕн усси вĕсенчен? Хырăма тăрантарать-и е тумлантарать? – сăмах хушмасăр тӳсеймерĕ Тракка.

– Мĕн кирлипе кирлĕ маррине эп хамах пĕлеп. Санăн вара пур хушăк-çурăка сăмсуна чикмесен те пырĕччĕ, – сиввĕн пăхрĕ йăх пуçĕ.

Сăмах чĕнмерĕ лешĕ, аллине сулса айккине пăрăнчĕ. Хăлăкĕ çапла Акпаттăрăн: хуть мĕн кала – хăйĕнне тăватех. Пĕр-пĕр ĕç тума картса хучĕ тĕк – хушша-хуппа ан кĕр.

Ик эрнене яхăн пурăнчĕç кăнтăрти ют çĕрте. Таварĕсене хăйсене кирлĕ пек улăштарса илчĕç, тепрехинче мĕн-мĕн илсе килесси пирки сутуçăсемпе калаçса килĕшрĕç.

– Япалусене лашасем çине тиесех илсе каясшăн-и эс? – инçе çула тухас умĕн ыйтрĕ хуçа.

– Тата мĕн çине тиемелле вара вĕсене?

– Ай-яй, туганым! Ку çăка тиенĕ лашусем виç-тăват кунранах утайми пулаççĕ. Тĕве е ашак кирлĕ сана! Пĕрре кăна та мар. Инçе çул çӳревре вĕсенчен шанчăкли çук. Расхучĕ пысăк пулмĕ, лашусемпе улăштармалла кăна, – канаш пачĕ кил хуçи.

Урхамахĕсене, шел пулсан та, çав ик курпунлă, вăрăм мăйлă тĕвесемпе, пăру пек пĕчĕк ашаксемпе улăштарчĕ Акпаттăр. Тепĕр ик уйăхран чиперех йăх çĕрне çитрĕç çулçӳревçĕсем, хальччен курман чĕрчунсемпе çынсене тĕлĕнтерчĕç.

Хăй кăнтăр çĕрсенчен вĕренсе килнине ĕçре усă курасси çинчен шутларĕ Акпаттăр. Йăх çĕрĕ çинчи шурлăхлă вырăнсене пăхса çаврăнчĕ, ик вырăнти шурлăх тăпринче тимĕр пуррине палăртрĕ. Кăна пĕлме йывăрах пулмарĕ. Тимĕр пур çĕрти шыв кӳлленчĕкĕсем тутăха пула сарă-хăмăррăн курăнаççĕ. Çавах çав вырăнсенчи тăпрана тĕрĕслесе пăхма шут тытрĕ.

Тимĕр шăратмалли кăмака валли кирпĕч хатĕрлеме тиврĕ малтан. Кирпĕч тумалли тăма ăçтан илмеллине те пĕлтерчĕ Акпаттăр. Хăй мĕн астăвассах Селим старик Çуткӳл патĕнчи тăмран тĕрлĕ чашăк-тирĕк, çын кĕлеткисем туса аппаланатчĕ. Лешсем, хĕвел çинче типĕтнĕскерсем, часах çуркаланса пĕтетчĕç. Халĕ ун пек япаласене вĕри кăмакара мĕнле хĕртмеллине пĕлекен Акпаттăр тăм шăтăкĕ патĕнчех кирпĕч тăвассине йĕркелерĕ. Хĕртсе çирĕплетмелли пысăк кăмакине лаптак чулсенчен Селимпе иккĕшех купаларĕç, тул енчен тăмпа шăлса лартрĕç. Тăрринче тĕтĕм тухма шăтăк хăварчĕç, юман пĕренесемпе тĕплĕн витсе çĕр купаларĕç. Урайне те çав лаптак чулсенех сарчĕç, шала кĕмелли çĕре кĕççе карса хучĕç. Пĕр çитменлĕхĕ пурччĕ çав кăмакан. Маччи аял пирки çиеле сарнă пĕренесем йăсăрланма пуçларĕç вут хутсан. Пĕр хăлаç пек çӳлерех хăпартма тиврĕ хайхине. Тимĕр шăратмалли кăмакасене Мăклă кулккапа Хушка ту çывăхĕнчи шурлăхсен çумĕнче лартрĕç. Кунта та Акпаттăр иртен пуçласа каçчен ĕçлерĕ, вĕркĕчсене те хăех ăсталарĕ. Çак вăхăтра пĕрисем вăрман касса кăмрăк хатĕрлерĕç, теприсем шурлăх çĕрне кăларса хĕвел çинче типĕтрĕç. Тăвата кăмакара тимĕр шăранать халь. Тимĕр ăстисем унран çар хатĕрĕсемпе хуçалăхра кирлĕ япаласем тăваççĕ. Таканланă самăр урхамахĕсем вут-хĕм сирпĕтеççĕ Акпаттăрăн, çӳллĕ кăлканлă çарансем çинче касăвĕ-касăвĕпе кĕçенсе çӳреççĕ. Кашкăр-упа та вĕсен çывăхне пыма хăрать. Ĕне выльăхĕ тӳшлĕ, çĕре çити тулса карăннă çиллисенчи чĕччисене пăрăвĕсем лаçлаттарса ĕмеççĕ. Сыснисем патне çын пыраймасть. Хăрт-харт! хирĕç тăраççĕ читленсе кайнăскерсем. Ĕнисемпе сыснисене ытларах тир-сăраншăн усраççĕ, аш-пăшĕ хăйсене çиме те, хир енчи халăхсенчен тырăпа улăштарма та çитет. Сурăхсен шучĕ çук. Çаран çине тухсан вĕçĕ-хĕрри курăнмасть. Вĕсен çăмĕнчен йăваласа тунă кĕççе тумтир çĕлеме каять, улшу-илӳ валли те çителĕклĕ. Тирĕсенчен хĕлле тăхăнмалли тумпа пушмак çĕлеççĕ, сăран тăваççĕ. Выльăх усрамалли витисем те хăтлă. Çĕр чавса лартнăскерсенче шартлама сивĕре те ăшă. Çулла ытлăн-çитлĕн хатĕрленĕ утти выльăх умĕнчен татăлмасть. Кашни çын хăй вырăнĕнче ĕçлет. Тимĕр шăратакансемпе улшу-илӳпе çӳрекенсем, выльăх пăхакансемпе кĕççе-тир тăвакансем – пурте хăйсен ĕçне тĕплĕ пĕлекенсем. Çу кунĕнче пурне те ĕç çитет, хĕле кĕрсен пур вăйпитти арçын сунара çӳрет. Çак ĕçĕн те пайти пысăк. Ятарласа çар тытмасть Акпаттăр, кирлех пулсан виç çĕр ытла ут çине лармалли вăйпитти арçын пур. Çар тытма сăлтав та пулмарĕ хальччен. Кӳршĕре пурăнакан халăхсем хушăран канăçсăрлантараççĕ пулсан та килсе тапăнниех пулман.

Тулăх пурнăç Сармат çĕрĕнче. Кăнтăр енчи çĕрсене çитсе килни усăсăр пулмарĕ Акпаттăршăн. Хăй курни-илтнине кирлĕ пек усă курма тăрăшрĕ. Йăхри арçынсемпе хĕрарăмсем уйрăмшарăн пурăнни канăç памасть йăх пуçне. Кăнтăр енче пĕрлех пурăнаççĕ. Хан тесен, унăн хăйĕн пĕр вăтăр

хĕрарăм пуль. Тĕрлĕ тум çĕлеççĕ, апат пĕçереççĕ, хуçалăхри ытти ĕçсене йĕркелсе пыраççĕ. Кашни вăйпитти арçынна пĕрер хĕрарăм пулсан та пырĕччĕ-ха. Мĕн авалтан пыракан йăла-йĕрке тăрăх уйрăммăн пурăнаççĕ çав. Пĕрлех пурăнсан, тен, хуçалăха тытса пыма та çăмăлрах пулĕччĕ. Кун пирки Траккапа Селим умĕнче сăмах хускатрĕ Акпаттăр пĕррехинче.

Çапла, Акпаттăр, хăй йăх пуçĕ пулсан та, ваттисене итлесе пурăнать. Пĕр йышăну та вĕсем ирĕк памасăр иртмест. Ку – авалтан пыракан çырман саккун. Кăна Акпаттăр та, ыттисем те хирĕçлеймеççĕ.

...Çутçанталăк илемĕпе киленсе, васкамасăр утать Акпаттăр вăрманпа. Хăй сунара тухни çинчен те манса кайнă ĕнтĕ вăл. Чечекленет тавралăх. Çĕр çине ура пусма именмелле: тĕрлĕ тĕслĕ чечек пуснă. Йывăçсем çулçă кăларса капăрланнă. Акпаттăрăн чун-чĕринче те çуркунне. Хăй те сисмест, юрă кĕвĕленет.

*Çурхи вăрман хушшипе*
*Саркаланса утам-и?*
*Çутçанталăк илĕртет*
*Мана юрă юрлама,* – таврана янратать уçă та çепĕç сас. Çакна илтнĕ вăрман та Акпаттăрпа пĕрле юрлать пек. Сунара та ячĕшĕн тенĕ пек кăна тухнă-ха вăл. Никама та усал тăвас килмест унăн паян. Акă хăй те сисмерĕ, Тарăн вар пуçне çитсе тухрĕ. Кунта кашнинчех пурăш тытаканччĕ. Шутсăр ĕрчесе кайнă вĕсем çак таврара. Шăтăкра хĕл каçнăскерсен шăмми-шакки кăна, тирĕсем те юрăхсăр. Çавăнпа вар пуçĕнчен пăрăнса иртсе вăрмантан тухрĕ, Хушка ту енне утрĕ. Кашни кунах хăй хуçалăхне пăхса çаврăнать. Паян та, акă, Мăклă кулккари тимĕр шăратакансем патне кĕрсе тухма шут тытрĕ. Тӳпе çине хăпарсан чарăнса тăчĕ Акпаттăр, çурçĕр енне куç ывăтрĕ. Мăклă кӳл çинче кăвак тĕтĕм тăрать. Виç çĕрте кăвайт çунни те уçăмлăнах курăнать. Ирхи апат пĕçереççĕ пулас хĕрарăмсем. Хушка ту çинче ут касăвĕ çӳрет. Юланутлă виç хĕрарăм вĕсене Мăклă кӳл енне хăвалаççĕ. Инçех мар çӳрекен сурăх кĕтĕвĕ ула-чăла курăнать. Çапла, Илем ертсе пыракан хĕрарăмсен тапăрĕнче те пурнăç хăй еккипе пырать. Çакна курнă Акпаттăр вăрахчен шухăша кайса тăчĕ, унтан Мăклă кулкка енне васкамасăр утрĕ.

## III. Ӳлккен те паттăр хĕрарăм

Илем шурăмпуçпех вăранчĕ. Çĕрĕпех канлĕ çывăраймарĕ çамрăк хĕрарăм: выртсанах вăрăмтунасем тарăхтарчĕç, кайран ыйхи вĕçрĕ. Ир енне тĕлĕрсе кайсан та пĕр тĕлĕкпех аташса выртрĕ.

...Чечеклĕ улăхпа пырать пек Илем. Кунĕ янкăр уяр, утмăлтурат тĕслĕ тӳпере тăрисем юрă янратаççĕ. Утнă май хăй те сисмерĕ Илем, Çӳлти палчă патне пырса тухрĕ пек. Пăхрĕ: хăйне хирĕç юланутçă килет. Тур урхамахĕ ташласа кăна пырать кервен арçын айĕнче. Такăна-такăна ӳксех чупрĕ

юланутҫа хирĕҫ Илем, ҫитсенех урхамахĕ ҫинчен сиксе аннă арҫын ытамне кĕрсе ӳкрĕ...

Вăрансан вăрахчен шута кайса, енчен енне ҫаврăнса выртрĕ Илем. Тек ҫывăраймасне пĕлсе тăрса тумланчĕ те ҫуллахи чатăртан тухса ҫăл патне анчĕ. Вар тăршшĕпех шур сурăх кĕтĕвĕ пек тĕтре упаленет. Шурăмпуҫ ҫути тӳпене лаппипех карса илнĕ ĕнтĕ, тулли уйăх та тĕтре пек шурă. Вар юппинче ҫăл шывĕ тапать, хăях хушшинчи шарлаксем тăрăх сиксе Мăклă кӳлле талпăнса юхать. Пăр пек сивĕ, таса шывра кутемепе кĕркке кĕтĕвĕсем ҫиҫĕм пек йăр-яр! ҫӳреҫҫĕ, сике-сике ӳпре-шăна тытаҫҫĕ. Хăлаҫ тăршшĕ ҫăрттансемпе шампасем шыври хăмăш-хăяха хумхантарса ишеҫҫĕ.

Ҫăл куҫĕнчи шывран вăрăм сарă ҫӳҫлĕ, ҫăмарта пек тулли те ҫаврака питлĕ, йăрăс кĕлеткеллĕ, вăтăралла ҫывхарнă хĕрарăм пăхать. Ик куҫ харшийĕ – ик кĕвенте. Вĕсен айĕнчен тăрă ҫăл шывĕнчен те тасарах пысăк кăвак куҫсем пăхаҫҫĕ.

Хăйĕн шыв ҫинчи сăнне шухăша кайса вăрахчен пăхрĕ Илем. Кăлт-кăлт сикет чĕри. "Ах, пăхса савăнма панулми пек сăнăм пур, ыталама – хăмăш пек яштака та хăва пек пиҫĕ пĕвĕм. Сар уйăх пăхса савăнать сăнăма, ҫил ачи ыталать пĕвĕме. Шыв ҫийĕ пур – сăнăма пăхса хурланма. Ҫулҫӳреве тухсан куҫкĕски ҫумра – савнине аса илсе савăнма. Курманни ҫулталăк ҫитет. Курсан та – куратăп тĕлĕкре. Тепĕр савăнăҫăм пурччĕ – куҫ тулли ывăлăм. Пĕлтĕр вун иккĕ тултарчĕ те ашшĕ патне куҫрĕ. Курас тесен те кураймăн халь. Арҫын шутне кĕчĕ ĕнтĕ Ярук".

Тул ҫутăлса ҫитнĕ пулсан та хĕвел тухайман-ха. Унăн шевлисем ту ҫинчи юмансене иленнĕ. Кӳлĕ ҫийĕ пăсланса выртать, хушăран хушă пулă выляса сикни кăна ункăсем кăларса хумсем ярать. Кайăксем те вăранчĕҫ. Инҫе мар ĕшнере шăпчăк ичăк-ичăк! чăк-чăк-чăк! тесе юрă пуҫларĕ, ăна хирĕҫ тепри сас пачĕ. Куккук та кук! кук! тесе сассине тĕрĕсленĕ хыҫҫăн таврана янратса авăтма пуҫларĕ. Вăранать ҫут ҫанталăк, хăйĕн яланхи йăли-йĕркипе пурăнма пуҫлать.

Ҫăлран пăрăнса кӳлĕ умне пычĕ Илем, тавралăха куҫ ывăтрĕ. Тапăрта та пурнăҫ йăл илнĕ. Ҫуллахи чатăрсен умĕнче кăвайт чĕртнĕ. Кăкшăм йăтнă хĕрсен ушкăнĕ шыва анать. Ҫаксене самантлăха пăхса илчĕ Илем, унтан тухăҫалла тинкерчĕ те салтăнма пуҫларĕ. Акă тепĕртакран чĕркуҫҫи таран шыва кĕрсе тăчĕ, пуҫне хыҫалалла ывăтса тутлăн карăнчĕ. Шывĕ лĕпех, ҫуллахи кĕске ҫĕр сивĕтсе ĕлкĕреймен ăна. Умĕнчен вак пулă кĕтĕвĕ шыва чалт-чалт сирпĕтсе чăл-пар саланчĕ. Вĕсем хыҫҫăн Илем те шыва сикрĕ, ҫурăмĕ ҫине ҫаврăнса выртса аллисемпе майĕпен авăсса ишрĕ. Ним те кансĕрлемест ăна, вутăш пек ярăнса ишекенскере. Шуйханнă вĕт пулăсем кăна ҫара кевтине перĕнсе кăтăклаҫҫĕ. Кăна та йывăра хумасть ҫамрăк хĕрарăм. Кăмăлĕ паянхи ир пекех тӳлек, пĕлĕтсĕр тӳпе евĕр яр уҫă унăн. Чĕри теме сиссе ыррăн кĕрккет. Ку та сăлтавсăр мар.

Хĕвел пайăркисем кӳлĕ çине ӳкрĕç. Çакна курнă Илем шарт сикрĕ, çыран енне хыпаланса ишрĕ. "Ах, мĕн туса хутăм эп? Çара кевтепе хĕвеле епле курăнмалла? Çарамаса хĕвеле кăтартни ырра мар теççĕ. Хĕвелрен асли те, вăй-хăватли те çук-çке". Йăпăр-япăр тумланчĕ Илем, йĕпе çӳçне йĕс турапа тураса çыхрĕ, васкамасăр утса çĕр пӳрт патне хăпарчĕ.

Чĕркуççи çӳллĕш курăк сывлăмпа çăвăннă. Курăк шăрки урана сыранать. Сывлăм ĕçсе пурăнакан вак кайăксем ура айĕнченех пăр та пăр! вĕçсе тухаççĕ. Пуç çинчех пĕр мăшăр тăри ире саламласа юрă шăрататать, хăйсен кĕвви майĕпе пĕрре аялалла чăмса, тепре аран курăнакан пăнчăсем пек пуличченех тӳпене çĕкленсе юрату ташши ташлаççĕ. Çерçисем тапăра карталанă вĕрлĕксене иленнĕ. Шăрçа ярăмĕ пек ларса тухнăскерсем, хӳрисене пăр-пăр вылятаççĕ, пĕр-пĕрин умĕнче курнăçланса çунаттисене сара-сара çуйхашаççĕ. Чечексем те пĕчченшер мар-тăр: пĕр-пĕрне хăйсен пылак сĕткенĕпе илĕртсе пуç тайса лараççĕ. Чечекленет, пĕтĕçленет çу кунĕсенче çутçанталăк, пурнăç тăсасшăн ăнтăлать. Çак вăхăтра çынсен чунчĕринче те çав туйăмсемех хуçаланаççĕ-тĕр.

Шухăша кайса утнă май тапăра та çитсе пыратчĕ Илем, çывăхрах çын уттине илтсе пуçне çĕклерĕ. Пăхрĕ: Тевет йăмăкĕпе тепĕр ик хĕр çăла анаççĕ.

– Ай-уй, аппа! Иртенпех шыратпăр сана. Ăçта çӳрен эс? – чĕвĕлтетрĕ Тевет çитнĕ-çитменех.

– Шыва кĕрсе уçăлас терĕм. Ирех пăчăхтарса тăрать паян, – чарăнса чечек-курăк шăркипе вараланнă урине кĕпи аркипе сăтăркаларĕ Илем. – Ма ирех кирлĕ пултăм вара?

– Мĕн ĕç хушăн теттĕмĕр те...

– Ĕçĕ-мĕнĕ...– пĕр вăхăт шухăша кайса тăчĕ аппăшĕ. – Ак мĕн, Тевет. Тепĕр вунă хĕр пухăр та кӳлĕре пулă тытăр. Асту, чавса тăршшĕнчен пĕчĕкреххисем ан пулччăр. Хăнасем умĕнче намăс курмалла ан тăвăр. Сăннăрсемпе асăрханулларах пулăр. Пĕр-пĕрне амантса пĕтерĕр тата.

– Юрĕ, веçех йĕркеллĕ тăвăпăр, – шăкăлтатса уйрăлчĕç хĕрсем.

Тевет хĕр шутне кĕнĕ ĕнтĕ. Сăн-пичĕпе те каснă-лартнă Илемех хунă. Аппăшĕ пекех яштака кевтеллĕ, çирĕп хул-çурăмлă. Пĕлмен çын арпаштарса яма та пултарать вĕсене. Пĕр вунă çул кĕçĕнрех кăна йăмăкĕ. Тевете юратать пулсан та, ĕçрен татмасть ăна Илем. Ытти хĕрарăмсемпе пĕр танах хуçалăхра тăрăшать лешĕ. Кирлех пулсан, ыттисем пекех çар тумĕ тăхăнса хĕç-сăнă тытма пултарать.

Кӳршĕллĕ пурăнакан ют йăхсем канăçсăрлантарнине пула алла çар хатĕрĕ тытмалли сăлтав самай пулкаларĕ юлашки çулсенче. Хирĕç тăру тавраш унччен те пулкалатчĕ-ха. Пурнарахпа лару-тăру çивĕчленсех пычĕ. Маларах вăл тĕрлĕ вак-тĕвекшĕн тухрĕ пулсан, каярах – çĕршĕн, мулшăн. Акпаттăрăн шăллĕсем, Тăлпарпа Кервен, йăх çĕрне сыхлама меллĕрех пул-

тăр тесе уйрăлса тухрĕç. Кервен Мăклă кулкка çывăхĕнче тĕпленсе пурăнать халь, Тăлпар хăйĕн çыннисемпе Хушка ту патĕнче йăва çавăрчĕ. Акпаттăр хăй вырăнĕнчех юлчĕ. Ăрури хутшăнусем улшăнмарĕç-ха, çапах пĕрпĕринпе килĕштерсе, пулăшса кун кунлаççĕ. Илем тапăрĕнчисем, Акпаттăр йăхĕнчен пулсан та, уйрăм пурăнаççĕ. Çулталăкра пĕрре кăна тĕл пулаççĕ арçынсемпе. Хĕрачасем амăшĕсемпех пурăнма юлаççĕ, арçын ачасем вун ик çул тултарсан ашшĕсем патне куçаççĕ. Илемĕн ывăлĕ Ярук та амăшĕ çумĕнче вун ик хĕл каçнă хыççăн ашшĕ патне куçрĕ. Хăйне тăлăххăн туять кун хыççăн Илем, тунсăхлать те.

Хĕрарăмсене кирлĕ пек хушусем пачĕ Илем. Пĕрисем йывăç хăвăлĕсене уçса хурт çăлĕнчен пыл илме кайрĕç, теприсем апат-çимĕç хатĕрлеме юлчĕç. Ача-пăчана та ĕçсĕр хăвармарĕ, кăвайт валли хăрăк йывăç-турат пуçтарса сĕтĕрме хушрĕ.

Ĕçсем йĕркеллех пынине курнă Илем хăй чатăрне кĕчĕ, тенкел çине ларса шухăша путрĕ. Çӳпçе тулли тум унăн – кĕве хурчĕ çиме. Ылтăн-кĕмĕлне кăларсан чатăр хĕвелсĕрех çуталса кайĕ. Çĕррисене тăхăнас – пӳрнисем çитмĕç, хăлха укисене çаксан уйăх та ăмсанса пăхĕ. Кам куçне савăнтарма кирлĕ çак тупра? Тумланса юсавланĕ çулталăкра пĕртен-пĕрре, юратнă çыннишĕн куç тулли пулма. Тытса ыталĕччĕ – тăсса алли çитеес çук. Килсен те – килĕ тĕлĕкре. Лартĕччĕ ăна чи сумлă вырăна, куç сиктермесĕр пăхса савăнĕччĕ, çавăра-çавăра чуптăвĕччĕ. Калас сăмахĕсем те чĕлхи çинчех. Тĕл пулăва кĕтсе кăкăрĕнчен сиксе тухас пек тапать çамрăк хĕрарăм чĕри, тунсăхпа касăлать.

## IV. Кĕтнĕ тĕлпулу

Кăнтăр иртсе каç енне сулăнчĕ. Çаплах пăчă, хĕвел çунтарать. Йывăçсемпе чечек-курăк пуçĕсене уснă. Мăклă кӳлĕ хĕрне ĕне выльăхпа сурăх-качака кĕтĕвĕсем тапăра аннă. Ĕнесем шăрăхран çăлăнăç шыраса хырăмĕсем таран шыва кĕрсе тăнă, пăрăвĕсем çыран хĕрринче чупкаласа выляççĕ. Вăрманти кайăксем те йывăç-курăк айне тарса пытаннă. Тĕлĕрет, канать çутçанталăк хĕвел айĕнче. Çĕрпӳртсем умĕнче кăна иртенпех ĕç вĕрет. Хĕр упраçсем пулă тытса килчĕç. Хăлаç тăршшĕ çăрттансемпе шампасене шăрăх çанталăкра пăсăлмасса тасатса, вĕлтĕренпе айлă-çийлĕ витсе хунă.

Вăрмана пыл татма кайнисем те таврăнчĕç, ултă чĕрес караслă пыл илсе килчĕç. Ĕнер пуснă виç вăкăр ашне пысăк хурансемпе пĕçерме çакнă, тутлă шăршă сарса лараççĕ. Хĕрарăмсем çĕнĕ тум тăхăнса капăрланнă. Пĕлтĕр Акпаттăр парнеленĕ кăвак пурçăнран çĕленĕ кĕпине тăхăннă Илем. Хăех çĕленĕ ăна, тĕслĕ шăрçасемпе тĕрлесе илемлетнĕ. Пурте хăнасем çитессе кĕтеççĕ.

Кĕтмен çĕртен çил хускалчĕ. Тӳпене кăнтăр енчен хура пĕлĕт явăнса тухрĕ. Кăшт тăрарахпа акă çумăр пăт-пат ӳккелеме пуçларĕ те тепĕртак-

ран йĕпенмеллех çума пуçларĕ, çине-çинех çиçĕм çиççе аслати кĕрлерĕ. Чăл-пар саланчĕç хĕрарăмсем. Хăшĕ – чатăрсене, хăшĕ – çĕр пӳртсене тарса пытанчĕç. Çумăр вăраха пымарĕ, мĕнле каппăл пуçланнă – çавăн пекех чарăнчĕ. Çавах тусана пусарчĕ, сывлăша уçăлтарчĕ. Çăвăнса тасалнă чечек-курăк пуç çĕклерĕ, йывăççен тумĕ çуталса-симĕсленсе кайрĕ. Пĕчĕк кайăксем юрă пуçларĕç. Çумăр вăхăтĕнче таçта пытаннă çерçи кĕтĕвĕ те каллех вĕрлĕксем çинче туй тăвать.

– Килеççĕ! Килеççĕ! – пĕлтерчĕç ват хурама çинчи ачасем.

Кăшăлах çул çине тухса тăчĕç ятлă-сумлă хĕрарăмсем. Аллисенче ăшăх тăм чашăксем. Вĕсенче тĕрлĕ апат-çимĕç: урпа çăнăхĕнчен пĕçернĕ пашалу, пулă, пыл... Чи аслă апат – вăкăр пуçĕ – Илем аллинчи тирĕкре. Ăна вăл хăнасене хисеп туса сĕнмелле. Пыл хурчĕн карасне пăрса йӳçĕтнĕ пыл та пур кăкшăмĕсенче. Ăна хаклă хăнасем килсен кăна кăлараççĕ. Улт-çичĕ çул хушши яра-яра йӳçĕтнĕскере йĕкĕр ывăç пек куркаран ытла ĕçейместĕн – ураран ӳкерет.

Çитрĕç юланутçăсем. Учĕсем çинчен ансан пилĕк таран авăнса малтан хĕвел тухăç енне пуç тайрĕç, унтан – кĕтсе илекенсене. "Çак çĕр çинчи вывăх-чĕрлĕх тӳшлĕ пултăр, çулсерен йыш хушса пытăр. Кӳллинчи пулли ан иксĕлтĕр. Вăрманта тĕрлĕ чĕрчун ĕрчетĕр. Ашĕ-тирĕпе ытлăн-çитлĕн усă курмалла пултăр. Ăрури йыш ӳссе пытăр. Хĕн-хур курмалла ан пултăр", – терĕç.

Кервенпе Тăлпар хушшинче тăракан Акпаттăр çине вĕлт пăхса илчĕ те Илем – пит-куçĕ пĕçерсе кайрĕ, чĕлхи хытса ларчĕ, урисем тăлланнă – ним тусан утасшăн мар.

– Аппа, аппа, мĕн пулчĕ сана? – пăшăлтатрĕ çумлăн тăракан Тевет.

Кун хыççăн тин тăна кĕнĕ пек пулчĕ хĕрарăм, тăлт-талт утса Акпаттăр умне пычĕ, пуçне пĕксе тирĕкне тăсрĕ. Çемçелсе пиçнĕ пуçран ик татăк хуçса илчĕ лешĕ. Пĕр татăкне Тăлпара, теприне Кервене тыттарчĕ. Хăй валли илнĕ чух алли ăнсăртран тенĕ пек Илемĕн аллине перĕнчĕ. Шарт! сикрĕ хĕрарăм, кевти тăрăх тем йăр-яр чупса иртрĕ. Тирĕкне чутах çĕре ӳкеретчĕ, юрать çакна асăрханă Акпаттăр тытма ĕлкĕрчĕ. Юлнă аша тирĕкĕпех ыттисене пачĕ Илем. Ытти хĕрарăмсем те апачĕсене салатса тухрĕç, йӳçĕтнĕ пыл ĕçсе пăхма сĕнчĕç. Кун хыççăн арçынсем те парăмра юлмарĕç, кашниех хăй куç хывнă хĕрарăма парне кӳчĕ. Парнисем тĕрлĕрен: тир-сăран, çипуç валли хаклă йышши купса таварĕ, йĕп-çип, çĕçĕ-хачă тавраш. Йыш ятне пĕрер хутаç кăш, сăсар, тилĕ тирĕсем пачĕç. Акпаттăр та Илем патне пычĕ, сылтăм аллине кĕмĕл сулă тăхăнтарчĕ, хулпуççийĕ çине тăват-пилĕк хăлаç тăршшĕ пурçăн тавар çакрĕ.

– Ах, каплах тăккаланмалла марччĕ, – теме кăна пултарчĕ лешĕ. Тинех савнине куçран чăр-р пăхрĕ. Тытса ыталас, чуптăвас килчĕ ăна çак самантра, анчах çын умĕнче аван марри тăна кĕртрĕ.

– Мĕнле пурăнан, Илем? Курманни çулталăк – ĕмĕр иртнĕн туйăнчĕ.

Тӗлӗкре те кашнинчех санпа аташатӑп, – пӑшӑлтататать Акпаттӑр. Вӗри сывлӑшӗ Илем питне пӗҫертет, кӑкӑрне хумхатать.

– Эп те ҫавах, – арҫынна тӗмсӗлсе пӑхать хӗр. – Уйрӑм тӑма аван мар. Атя апат ҫывӑхнерех. Ҫынсемпе пӗрле пулар.

Пилӗк теҫетке вӑйпитти ар курӑк ҫине майлашса ларнӑ. Тӑрӑх сарнӑ кӗҫҫе ҫинче тӗрлӗ апат-ҫимӗҫ. Хӗрарӑмсем, арҫынсене хирӗҫ вырнаҫнӑскерсем, хӑнисене сӑйлаҫҫӗ. Илеме хирӗҫ Акпаттӑр ларать. Ҫумлӑн – Тӑлпарпа Кервен.

– Ах, Илем! Апатӑр ҫисе тӑранми тутлӑ-ҫке! Ҫӑварта пыл пек ирӗлет. Йӳҫ пылӑра сыпсан – кӑмӑл ҫӗкленет, юрлас-ташлас килет! – тет пуҫне ухауха Тӑлпар.

– Юрлӑр, ташлӑр. Хӑнана килнӗ ҫыннӑн савӑнмаллах ӗнтӗ, – хуравлать Илем. Ҫумӗнче ларакан Тевете хӑлхинчен тем калать. Тепӗр самантран лаша ҫилхинчен ӑсталанӑ кӗвӗ хатӗрӗ илсе килнӗ Тевет хӑнасене хирӗҫ тунката ҫине вырнаҫрӗ, пӳрнисем янравлӑ хӗлӗхӗсене карӑнтарчӗҫ.

*Ҫу кунӗсем ҫитсессӗн*
*Ма савӑнса юлас мар?*
*Ыр хӑнасем килсессӗн*
*Ма юрласа ташлас мар?*
*Ай, хӑнасем килсессӗн*
*Апат лартма вырӑн ҫук.*
*Савӑннипе хуҫисен*
*Ларса канма вӑхӑт ҫук,* – юрлать Тевет. Уҫӑ та ҫепӗҫ сасси таврана чечек шӑрши пек сарӑлать, вӑрмана ҫисе ян-ян! каять. Тевете тепӗр виҫ хӗр шӑхличсемпе кӗвӗлесе пулӑшаҫҫӗ. Тӳсеймерӗҫ хӑнасем, сиксе тӑрса ташша ерчӗҫ, хӗрарӑмсене ташӑ картине турта-турта кӑларчӗҫ. Илем те Акпаттӑрпа алла-аллӑн тытӑнса ташлать. Йӳҫ пыл ӗҫмесӗрех пуҫӗ ҫаврӑнать хӗрарӑмӑн, чӗрин таппи тӑнлавӗнче шаккать. Юратнӑ ҫынни ҫумрине халь те шанас килмест унӑн. Пӗтӗмпех тӗлӗкри пек туйӑнать. Кервен кӑна темшӗн ташша хутшӑнмарӗ, юпа пек хытса тӑнӑскер, Тевет ҫине куҫ илмесӗр пӑхрӗ те пӑхрӗ. Йӗкӗт вун ҫиччӗ кӑна тултарнӑ-ха. Акпаттӑрӑнни пек вӑрӑм, яштака кевте, сарлака хулпуҫҫи. Чукмар евӗр аллинчен вӑй-хӑват тапса тӑрать. Тевет те йӗкӗте асӑрхарӗ, юрланӑ май ун енне пӑхкаласа илчӗ. Ахальтен мар мӑй ҫыххипе хӑлха алки парнелерӗ Кервен. Килӗштерет апла. Ҫакӑ ҫамрӑк хӗре савӑнтарать, вӑтантарать те.

Кӗвӗ хыҫҫӑн кӗвӗ шӑранать. Ташӑҫӑсене ӑшша пиҫтерет. Хӗвел те вӑрман ҫине анчӗ – ҫавах пӑчӑ. "Шыва кӗрсе уҫӑлас", – терӗҫ хӑнасем, пуҫтарӑнса Мӑклӑ кӳлӗ хӗрне анчӗҫ. Акпаттӑр вӗсемпе каймарӗ, Илеме ҫавӑтса улӑх тӑрӑх утрӗ. Кервен тапӑртах юлчӗ, Тевет умне хӑюсӑррӑн пырса тӑчӗ.

– Куҫа илме ҫук сан ҫинчен. Пулайӑн-ши манӑн чун варли? – шӑппӑн калаҫать йӗкӗт.

– Чун варли пулсан – мĕн тăвăн манпала? – пат тӳррĕн ыйтать хĕр каччă куçĕнчен чăр пăхса. – Хитрелĕхе курса ан сăхлан. Хĕвел тухать – çухалать. Санăн чун варли пулнин мĕн хăвайти? Тĕтре те çуллахи ирпе кашнинчех килет. Çулталăкра пĕрре килсе курăнăн та – çухалăн, тепĕр çулччен ăш çунтармăш пулса юлăн. Уйăхпа хĕвел пек ялан куç умĕнче пулинччĕ.

– Çапла калаçса çеçке çураймасăрах татса пăрахăн-ши вара? – пуçне усать каччă. – Пĕр сапакари мăйăр пек çумлăн пулсан та курланкăсем уйрăм-ши?

– Аплах хурланса шанчăка ан çухат. Шанчăк пур чух шăпчăк та телейлĕ теççĕ. Самантлăх юрату çимĕçĕ пулас килмест манăн. Пулсан – пултăр ĕмĕрлĕх.

– Ĕмĕрлĕх пĕрле пулас тесен мĕн тумалла-ши? Урхамахăм çунатлă, лартăттăм та уйăх çине илсе хăпарăттăм. Йăли-йĕрки пиртен тухнăскер марçке...

– Каларăм вĕт, ытла ан хуçăл. Калаçса пĕр-пĕрне лайăххрах пĕлер,– кулкаласа пăхать Тевет. Ăшă кулли шанăç кӳрет Кервене, кăмăлне çĕклет.

Çак вăхăтра иккĕн вăрман хĕрринчи ват хурăн айĕнче лараççĕ.

– Çак кун çитессе, сана курасса мĕн чул кĕтнĕ эп! Халĕ, акă, тĕл пултăмăр та, калас сăмах ăшрах путланчĕ. Хуть тăраниччен курса юлам сана, – арçын хулпуççийĕ çине пуçне хурса куçран пăхать хĕрарăм.

– Ах, Илем! Тĕнче курса çӳресе куç уçăлчĕ ман. Ниçта пирĕн пек уйрăмшарăн пурăнмаççĕ. Кун çинчен ваттисен умĕнче сăмах хускатрăм – вăрçса пĕтерчĕç. Эс çумра чух тĕнче тĕрлĕ тĕслĕн курăнать мана, çук чух вăл та тĕксĕм. Мĕне кирлĕ мана пуянлăх çумра эс çук пулсан? Лартам та урхамах çине илсе каям кăнтăр енчи ют çĕре!

– Юханшыв та çыран тыткăнĕнче, Акпаттăр. Пĕр çил кăна нăхтасăр çӳрет пуль. Пиртен тухман йăла-йĕркене хирĕç кайса ăраскаллă пулаймăпăр. Ĕмĕтленни – ĕмĕтпех юлĕ, курасси умрах пырĕ. Хĕвел пӳрнине уйăх илеймĕ. Хама çывăх çынсенчен Ярук ывăлăм пурччĕ тата. Каснă-лартнă хăвнах хунăскер. Ăна та çулталăк курман. Иртсе пыракан çамрăклăхăма аса илсе пăхма – Тевет çумра. Йывăр вăхăтра калаçса чуна пусарма эс çумра çук. Юманпа çăка атте-анне манăн, хурăн – хурăнташ.

– Мана та чулран туман-çке. Сана аса илсен чĕре шар! çурăлать. Ывăлăм çумра пулни кăна çунакан ăша пусарать. Тĕрлĕ шухăш пуçа çавăрнипе çӳç-сухал та кăвакара пуçларĕ ĕнтĕ. Ах! темесĕр тăн та тухмасть, – тет Акпаттăр ассăн сывласа.

Таврана каç сĕмĕ анчĕ. Тӳпене тĕл-тĕл çăлтăрсем тапса тухрĕç. Уйăх халь тесен халь кусса тухас пек: çĕрпе пĕлĕт хушшинче вăйсăр çутă ӳкернĕ. Лăпкă таврара. Йывăç çулçисем те хускалмаççĕ. Кайăк-кĕшĕк те тутлă ыйхăра. Мăклă кӳлĕ енче кăна карăш макăрать. Илем тапăрĕнче те сас-чӳ илтĕнмест. Ача-пăчапа уява хутшăнман ватăрах хĕрарăмсем паçăрах çывăр-

ма кĕнĕ, çамрăккисем мăшăрăн-мăшăрăн саланнă. Акпаттăрпа Илем çаплах хурăн айĕнче лараççĕ. Пĕр-пĕрне тунсăхласа çитнĕскерсен калаçса сăмах пĕтмест, пăхса куç çути иксĕлмест.

– Ах, чунăмçăм! Темшĕн чĕре вырăнта мар-çке. Тĕл пулайăпăр-ши тепре? Ют ăрусем тапăнма меллĕ самант кĕтсе тăраççĕ. Хамăр сыхлăхлă пулнăран кăна хăяймаççĕ, – тет Илем.

– Çапла, лару-тăру çивĕчленсех пырать. Çĕрпе пурлăх кăна тĕнчене тытса тăраççĕ-шим? Апла-капла çаврăнса тухас пулсан, виç çĕр ытла юланутлă çарăм пур. Эсир те хăвăршăн хăвăр тăма пултаратăр. Тăшмана хирĕç пĕрлешсе вăрçма та тӳр килĕ-ши?

– Пуласси çинчен пуç ватса кăмăл-туйăм еккине шуйхатар мар. Мĕн пулассине пĕлме пире пӳрмен. Ыррине ĕмĕтленсе пурăнар. Акă ирпе таврăнса кайăн – пĕччен юлăп, каллех килес çул тĕл пуласне ĕмĕтленсе, кĕтсе пурăнăп. Малашне йăпанса пурăнмалăх парнелинччĕ мана пĕр хĕр пĕрчи. Эп мĕнле хĕрарăмне хăвах пĕлен. Ĕмĕрĕпе пĕр арçын çине куç вылятса пăхмарăм. Санпа тĕл пулса пуçа çухатрăм ĕнтĕ, – каллех арçын ытамне кĕрсе ӳкет хĕрарăм.

## V. Хирĕçтăру

Виç уйăх ытла иртрĕ унтанпа. Сисĕнмесĕрех кĕр кунĕсем килсе çитрĕç. Вăрман сарă, хĕрлĕ сăрăсемпе капăрланчĕ. Шыв тăрăлса тасалнă, тарăн вырăнсенче те тĕпĕ курăнать. Кайăксем те юрламаççĕ ĕнтĕ, кăнтăра вĕçсе кайнă. Хура кураксем ушкăнланнă, асар-писер шав кăларса пуç çинче явăнаççĕ. Тăрна, хуркайăк картисем салхуллăн кăшкăрашса ăсанаççĕ. Темле тунсăхлăх тăрать çутçанталăкра.

Илем тапăрĕнчи пурнăç та хăй еккипе пырать. Выльăх-чĕрлĕх валли утă-курăк çуллах çителĕклĕ хатĕрленĕ, тип вуттине шаршансене шăкăрин купаласа хунă. Хĕл каçмалăх тĕрлĕ çырла-кăмпа типĕтсе апат-çимĕç  çĕр пӳрчĕсене вырнаçтарнă. Унтах типĕтнĕ пулăпа аш çыххи-çыххипе çакăнса тăраççĕ. Пысăк тăм савăтсенче урпа çителĕклĕ. Ăна килĕсенче тӳсе çăнăх тăваççĕ хĕрарăмсем, кайран çав çăнăхран пашалу пĕçереççĕ. Çĕр пӳртсене те хĕле валли йĕркене кĕртнĕ. Тăррисене тип утăпа çĕнĕрен витсе пуслăхсемпе пусăрăнтарнă, кăмакисен  чулĕсене улăштарнă. Çанталăк типĕ тăрать, çавна май пур вăйпитти хĕрарăм вăрманта типĕ çулçă пухнă çĕрте тăрăшать. Çулçи выльăх-чĕрлĕх валли кирлĕ.

Тĕл пулнă вăхăтра шантарнă сăмахне тытрĕ Акпаттăр. Тепĕр эрнерен Ярукпа тепĕр вунă çар çынни тулли лавсемпе килсе çитрĕç. Лавĕсем çинче тĕрлĕ çар хатĕрĕ, хĕçсем, сăнăсем, ухă йĕпписем. Уйрăмах тимĕр татăкĕсем çĕлесе лартнă кĕске сăран кĕпесемшĕн савăнчĕç хĕрарăмсем. Самай йывăр пулсан та, хĕç-сăнăран лайăх сыхлать вăл. Çаплах çаврака тимĕр татăкĕсенчен ăсталанă калпаксем те шăп кирлĕскерсем пулчĕç. Çак парне-

семшĕн Илем те савăнчĕ-ха, çапах та кăмăла çĕклекенни – Ярука курма май килни пулчĕ. Ывăлне ăçта лартса мĕнле хăналама та пĕлеймерĕ амăшĕ, çулталăк хушшинче уйрăмах тĕрекленсе кайнăскере куç илмесĕр пăхрĕ те пăхрĕ. Вăрах тăмарĕç килнисем, апатланнă хыççăнах каялла çула тухрĕç. Каллех хирти йывăç пек пĕччен тăрса юлчĕ Илем. Пĕр вăрттăн савăнăç кăна кӳнехтерчĕ йăшнă кăмăлне. Варĕнче Акпаттăртан юн илнĕ ача çитĕнет унăн. Хĕрача çураласне тӳсеймесĕр кĕтет, чун-чĕри савăнăçпа тулать.

Йăх çĕрĕ çинче лăпкă мар. Пĕрмаях сыхă пулма тивет. Ик эрне каярах кăна ют йăх çыннисем Илем патĕнчи ĕне выльăха кăнтăр кунĕнчех хăваласа кайма тăнă. Çакна кĕтӳçсем çитсе пĕлтернĕ хыççăн вăтăр хĕрарăм учĕсене утланса хурахсем хыççăн ыткăнчĕç. Виç юланутçа йăлмаклă пăявсемпе лашисем çинчен сĕтĕрсе ӳкернĕ хыççăн ыттисем вăрмана тарса çухалчĕç. Тыткăна лекнисене те саламатпа вĕтелесе ирĕке ячĕç, тепрехинче кун пекки ырăпа вĕçленмесне пĕлтерме хушрĕç. Çакăн хыççăн, чăнах та, кун пек пăтăрмахсем урăх пулмарĕç. Пурпĕрех çĕрĕн-кунĕн вуншар çын улшăнаулшăна хурал тăрать, учĕсене те ал айĕнчех тытаççĕ.

Арçынсем патĕнче кун пек тытăçусемех пулмарĕç-ха. Ют йăх çыннисем тĕл пулсан та хирĕç тăмарĕç, часрах тарса ӳкме тăрăшрĕç. Сисет Акпаттăр, ку вăхăтлăха кăна, вăрçă вучĕ хăçан та пулин сиксе тухатех. Ăрури арçынсем çар ăсталăхне ӳстерессине тимлеççĕ халь, ачасене те вĕрентеççĕ. Ярук та ыттисемпе пĕрле çар ĕçне хăнăхать. Ашшĕ хура тур урхамах парнелерĕ ăна. Малтанах хăй асăрханă çăрхана, таçтан ут касăвне ернĕскере, йăлмаклă пăяв ывăтса тытрĕ Акпаттăр, виç кун хушши утланса хăваларĕ. Кĕçех лешĕ алла вĕренчĕ. Кăшт пурнарахпа ашшĕ йыт çури те парнелерĕ. Вăхăт иртнĕ май ăйăрпа йытă ачан çывăх тусĕсем пулса тăчĕç. Утне – Çиçĕм, йыттине Кашкăр ят пачĕ Ярук. Хуçи чĕннине илтсенех çитсе тăраççĕ. Сунарта Кашкăр упаран та хăрамасть, мамăк тирлĕ тискер кайăксене те йĕрлесе тытма пулăшать. Кĕр кунĕсем çитсен ăрури арçынсенчен ытларахăшĕ сунар ĕçне тытăнать. Ку ĕçĕн пайти пысăк. Тир-сăрана хуçалăхра кирлĕ япаласемпе улăштараççĕ, хăйсене валли те аш-пăш çителĕклĕ хатĕрлеççĕ.

Вăрман çарала пуçларĕ. Кас-кас вĕрекен çил йывăç тăррисем çинех аннă пĕлĕтсене хăвалать. Çумăрĕ те çуллахи пек чашлаттарса çумасть, пĕр тытăнсан темиçе кун хушши вĕсхесе тăрать.

Паян иртенпех уяр çанталăк. Тӳпе уçăлнă, çил те лăпланнă. "Сунара çӳреме вăхăт çитрĕ", – терĕç ваттисем. Чатăр вăрманĕнчи юманлăхра çулсерен йĕкел ăнса пулать. Çавна пула унта хир сыснисемпе пăшисем ĕрчесе кайнă. Çĕр ытла сунарçă пуçтарăнса унта кайрĕç.

– Эс ман вырăна юлан. Асту, тем сиксе тухас пулсан тӳрех пырса пĕлтер. Ăçта тупмаллине пĕлен, – терĕ Акпаттăр ывăлне.

Сунарçăсемпе тем пекех каясси килет Ярукăн, анчах ашшĕн сăмахĕн-

чен тухма юраманни чарать. Сăнă ывăтма, ухăпа пеме, хĕç вылятма та ыттисенчен кая мар пултарать вăл. Сунарçăсемпе упа-кашкăр тытма та пĕрре кăна мар хутшăннă. Хăйне илменшĕн те пит пăшăрханмарĕ-ха Ярук. Ашшĕ хăй вырăнне шанса хăварни темрен хаклă уншăн. Текех пĕчĕк ача мар çав вăл. Пĕвĕпе ашшĕне çитсе килет.

Пуçтарăнса кайрĕç сунарçăсем. Юлчĕç Ярук пек ачасемпе хĕç-сăнă тытайми пулнă ватăсем. Тата тепĕр вăтăр вăйпитти арçын хурала юлчĕ.

Ларать Ярук пӳрт умĕнчи пĕрене çинче. Çĕççипе йывăç пуленкинчен тăрăшсах тем ăсталать. Акă çĕр пӳртĕнчен Тракка старик тухрĕ, Ярука курса ун еннелле утрĕ.

– Мĕн ĕçлен, ачам? – çумлăн ларса  Ярук аллинчи пуленке çине вăйсăр куçĕпе тинкерчĕ ватă çын. – Ха, çын кĕлетки мар-и вара ку? Пар-ха, пар, тытса пăхам.

Çăка пуленкинчен касса кăларнă çын кĕлеткине вăрахчен çавăркаласа пăхрĕ Тракка. Кĕлеткен алли-ури те, пит-куçĕ те пулнинчен тĕлĕнчĕ.

– Кун пек çын кĕлеткисене кăнтăр енчи çĕрсенче нумай курнă эп. Унта тăмран йăваласа тăваççĕ вĕсене, е чулран касса кăлараççĕ, – хăй курнине каласа пама пуçлать ватă.

– Эх, кайса курасчĕ кăнтăрти çав çĕрсене! – ассăн сывлать Ярук. – Хĕл пулмасть тĕк, тумтир те кирлĕ мар пуль унта пурăнакансене?

– Тумĕсем, паллах, пур. Çарамас çӳремеççĕ, анчах эпир тăхăнаканнинчен уйрăлса тăрать вăл. Суту-илӳ тăвакан пасар текеннине кĕрсе курсан вара!

Тĕлĕнтермĕш чĕрчунсемпе ӳсен-тăрансем, хальччен курман çимĕçсем çинчен каласа парать Тракка. Хăлха тăратсах итлет Ярук.

– Эс çамрăк-ха. Пурнас кунусем малта, таçта та çитсе курăн, теме те вĕренĕн. Эп ватăлтăм ĕнтĕ, текех çул çӳресе пулмĕ, – тет Тракка калавне вĕçлесе.

Чăнах та, самай ватăлнă çав. Унччен патвар пулнă кевти пĕчĕкленсе имшерленнĕ, çурăмĕ хыçне курпун пекки тухса ларнă, куçĕсем те йăвашланнă. Пурпĕр ĕççĕр лармасть. Вăйĕ çитнĕ таран тир-сăран тăвакансене пулăшать.

Сасартăк сăрт тӳпеме юланут килсе тухрĕ. Ахаль те хыт пыракан урхамахне саламатпа çунтарать кăна çынни. Ним ăнланаймасăр пăхаççĕ Ярукпа Тракка. Сунарçă тесен – ма çав териех хыпаланать? Килен-каянсем пулассине те асăрхаттармарĕç-çке. Тупсăмĕ урхамах çывхарсан паллă пулчĕ. Çитнĕ-çитменех учĕ çинчен анчĕ çын – хурала хăварнă çар çыннисенчен пĕри иккен. Хăй юнланса пĕтнĕ, лăс усăннă аллинчен юн тумлать.

– Ют йăхсем вăрçăпа килеççĕ! Хĕç-сăнă тытма пултаракансем хирĕç тăма хатĕрленĕр. Тăшмана тытса чарас тесе тăтăмăр та, пĕччен кăна сывă юлтăм, – терĕ усал хыпар çитерекен. Хăй çавăнтах тĕшĕрĕлсе анчĕ.

– Нумайӑн-и вӗсем? Кунтан инҫе-и? – умне пӗшкӗнчӗ Ярук.

– Нумай... Килеҫҫӗ... – аран ҫӑварне уҫрӗ хурал ҫынни, пуҫӗ лӑнч усӑнчӗ.

– Урхамахна утлан та кай часрах аҫу патне! Хурахсем тапӑннине пӗлтер. Эп юлнӑ пек ҫынсемпе вӗсене чарса тӑма тӑрӑшӑп. Вӑхӑт ан иртер. Кай часрах! – васкатрӗ Тракка.

Пӗрех ши-и! шӑхӑрчӗ Ярук – урхамахпа йытӑ ҫитсе те тӑчӗҫ. Ҫак вӑхӑтра хупӑрласа килекен тӑшман эшкерӗ те курӑнчӗ. Саламатне ҫӗклерӗ кӑна – чӗвен тӑрса тапса та сикрӗ ҫӑрха ут. Ҫакна курнӑ тӑшмансем урхамах ҫулне пӳлме пӑхрӗҫ, анчах ҫав вӑхӑтра умӗсене йытӑ сиксе тухрӗ, харлатса малти юланутҫӑ ҫине сикрӗ. Лешӗ, ҫакна кӗтменскер, учӗ ҫинчен персе анчӗ. Йытӑран хӑранӑ тепӗр ик урхамах каялла тапса сикрӗҫ. Ярук умӗнче ҫул уҫӑлчӗ. Ҫӑрха ут ӑна тухӑҫ енне ҫил пек илсе кайрӗ. Хыҫран хӑвалакансен учӗсем каяран кая юлса пычӗҫ, кӑшт тӑрарахпа куҫран та ҫухалчӗҫ.

Утмӑл-ҫитмӗл ватӑ-вӗтӗ тӑшмана хирӗҫ карталанса тӑчӗҫ. Хаяр ҫапӑҫу пуҫланчӗ. Таврара хӗҫ чанклатни, ухӑ йӗпписем шӑхӑрни, ахлату-йынӑшу тӑчӗ. Тӑшман хупӑрласа илнӗ хӳтӗленекенсен йышӗ чаксах пырать. Акӑ Траккана та умлӑн-хыҫлӑн икӗ ухӑ йӗппи тӑрӑнчӗҫ. Чӗркуҫленсе ларсан та ал айне лекнӗ тӑшмана касрӗ вӑл. Ҫак самантра ӑҫтан тухрӗ-ши вӑй-халӗ?

– Вӑрмана тарса пытанӑр! Унсӑрӑн вӗлерсе пӗтереҫҫӗ! – юлашки вӑйне пухса ури ҫине тӑма хӑтланчӗ вӑл. Акӑ тепӗр ҫӗмрен мӑйне тӑрӑнчӗ. Ӳкрӗ пулсан та хӗҫне аллинчен вӗҫертмерӗ ватӑ ҫар ҫынни, вӑрман енне чакакан ҫамрӑксен ушкӑнӗ ҫине вӑраххӑн пӑхса илсе пуҫне ҫӗре ӳкерчӗ. "Эх, ҫитеймерӗ кӗтнӗ пулӑшу. Хуть ҫамрӑксен пӗр пайӗ ҫӑлӑнса юлтӑрччӗ", – пӑшӑлтатрӗ вӑл.

Пӗр ҫирӗм ҫамрӑка вӑрман хӑй хӳттине илчӗ. Аманнисене вӗлерсе тухрӗҫ хурахсем, ҫӗр пӳрчӗсенчи халсӑр ватӑсене сӗтӗрсе кӑларса чиксе-касса пӑрахрӗҫ. Апат-ҫимӗҫпе тӗрлӗ тупра ҫӗр пӳрчӗсене ҫӗмӗрсе ҫаратрӗҫ, кайран вут тӗртсе ячӗҫ. Таврари ҫӗр юнпа тӗтӗм айне пулчӗ.

Сунарҫӑсене часах тупрӗ Ярук, хӑй пӗлни-курнине кӗскен каласа пачӗ. Вӑхӑт иртерсе тӑмарӗҫ арҫынсем, ал-хапӑл пуҫтарӑнса тӑшмана хирӗҫ кайрӗҫ. Тӑхӑр хир сыснипе ҫичӗ пӑши вӑрман уҫланкинчех выртса юлчӗҫ. Ик юланутҫа Тӑлпарпа Кервенрен пулӑшу ыйтма ячӗ Акпаттӑр.

Хӑйсем пурӑнакан вырӑнта вут-кӑвар алхаснине тӳрех асӑрхарӗ Акпаттӑр. Лӑпланнӑ ҫапӑҫу ҫав вырӑнтах ҫӗнӗ вӑйпа тапранчӗ. Арӑслан пек паттӑррӑн ҫапӑҫрӗҫ Акпаттӑр ҫыннисем хӑйсенчен виҫ-тӑват хут йышлӑрах тӑшманпа. Урхамахсем шуйса аманнисемпе вилнисене таптарӗҫ, вӑрман ҫумӗнчи ҫаран юнпа пӗвенчӗ. Тапӑнса килнисем хӑйсен ҫур йышне ҫухатрӗҫ ӗнтӗ, Акпаттӑр енче те ҫухату сахал мар. Кӗске вӑхӑтрах ҫитмӗл ытла ҫар ҫынни пуҫ хучӗ. Тӳсеймерӗ тӑшман эшкерӗ, аманни-вилнисене ҫапӑҫу хирӗнче хӑварса каялла чакрӗ, вӑрмана кӗрсе ҫухалчӗ. Тинех тӑн ҫавӑрса яма май килчӗ. Вилнисене пӗр ҫӗре, аманнисене тепӗр ҫӗре йӑтса хучӗҫ,

çар хатĕрĕсене пуçтарчĕç. Тăшман виллисем кăна выртса юлчĕç çаран çинче.

Пуç усса тăрать Акпаттăр Тракка вилли умĕнче. Çухату чĕрине çĕçĕ пек касать, куçĕсенчен куççуль пăчăртаса кăларать. Паян арçынсене сунара илсе кайнишĕн те хăйне ӳпкелет вăл, çынсене упраса хăварайманшăн пăшăрханать. Акă такам çумне пырса тăчĕ. Пăхрĕ – Ярук пуçне усса тăрать. Сăмах чĕнмесĕр ывăлне çупăрларĕ ашшĕ, пуçĕнчен шăлса ачашларĕ.

Пулăшу ыйтма янă юланутçăсем урхамахĕсене кăпăка ӳкерсе çитрĕç.

– Тăшмансем Тăлпарпа Кервен патĕнче те пулнă. Ватти-вĕтти таранах вĕлерсе пĕтернĕ, çĕр пӳртсемпе ытти хуралтăсене вут тĕртсе çунтарнă. Тăлпарпа Кервенĕн виллисене тупрăмăр, – тесе пĕлтерчĕç.

Çак хыпара илтсен тӳсеймерĕ Акпаттăр, чун хавалĕпе кăшкăрса ячĕ те аллинчи сăннине çĕре печĕ. Тăрн-н турĕ çурри таран çĕре кĕрсе ларнă сăнă.

– Тискер кайăк та сиртен ыр кăмăллăрах! Çук сире каçару! Хăвăр юхтарнă юнпа хăвăрах чыхăнăр-ха! Ма тарса пытантăр! Тухăр, пуçланă ĕçĕре вĕçне çитерĕр! – сывлăша чĕтретрĕ аслати пек хăватлă сас. Çак сассăн ахрăмĕ вăрмана çитсе çапăнса пĕр хушă кĕрлерĕ.

## VI. Кан йылга – юн çырми

Çапăçу хыççăнхи шăплăх вăраха пымарĕ. Тăшман каллех вăрмантан тухрĕ. Хальхинче Акпаттăр хăй çыннисене пĕрле тăратмарĕ, пĕчĕк ушкăнсене уйăрса ячĕ. Хăйсене тапăнасне те кĕтсе тăмарĕç, хирĕç тухса хурахсене хăйсене пырса çапрĕç. Лешсем, çакна кĕтменскерсем, малтанлăха çухалса кайрĕç. Ярукпа юлташĕсен те пулăшăвĕ самай пулчĕ. Ухăсемпе персе чылай тăшмана тĕп турĕç, йăлмаклă пăявсемпе учĕсем çинчен сĕтĕресĕтĕре антарчĕç. Тимĕрлĕ сăран кĕпесем йăх паттăрĕсене хĕç-сăнăран аван упрарĕç. Çавăнпа çухату та сахалрах пулчĕ. Тăшман каялла чакма та пуçланăччĕ ĕнтĕ, çак вăхăтра вăрмантан аллă-утмăл çынлă тепĕр хурах ушкăнĕ сиксе тухрĕ. Вĕçленсе пыракан хаяр çапăçу çĕнĕрен хĕрсе кайрĕ.

Акпаттăрпа çумлă виç çар çынни вилмеллех аманса ӳкрĕç. Вун-вун икĕ тăшмана хирĕç пĕчченех тăрса юлсан та чакмарĕ вăл, çаплах касрĕ, чикрĕ. Акă кăкăрне сăнă тăрăннă урхамах малти урисем çине персе анса йăванса кайрĕ. Хĕсĕннĕ урине ут айĕнчен кăларнă хушăра хурахсенчен пĕри хĕçпе сулса сăран кĕпен хыçал енне çурса ячĕ. Ал-хапăл ури çине сиксе тăнă Акпаттăр хăйне те сăнăпа чиксе ӳкерчĕ, ют ут çине вăштах сиксе ларчĕ. Тăшмансем çурăмĕ уççине асăрхарĕç, тĕллесе сăнăсем ывăтма, ухăпа пеме пуçларĕç. Виç ухă йĕппи тăрăнчĕ Акпаттăр çурăмне, пурпĕр сăннипе хĕçне аллинчен вĕçертмерĕ, аманнă кашкăр пек урса кайсах çапăçрĕ. Акă пĕр сăнă çурăм шăмминех лекрĕ. Куçĕ хуралса килчĕ унăн, алли-ури итлеми пулчĕç. Сăнăпа хĕçĕ аллинчен тухса ӳкрĕç, хăй те ут çинчен шуса анса тăн çухатрĕ. Тăнĕ кĕнĕ пек пулсан тăма хăтланчĕ – тăраймарĕ. Пуçне аран-

аран çĕклесе таврана пăхса илчĕ. Çапăçу çĕр пӳртсен хыçĕнче пырать-мĕн. Хура тур ут çинчи Ярука та тӳрех асăрхарĕ. Пуçне çурçĕр енне çаварчĕ – утлă çар çĕр кисретсе килет. Малти ут çинче Илем ларать. "Ах, ма маларах çитеймерĕр-ши?" – йăлтлатрĕ шухăшĕ каллех тăнне çухатнă май. Акпаттăр ӳкнине Ярук та курчĕ, хĕçĕпе тăшмана касса-хирсе ашшĕ патне ыткăнчĕ, çитсен лешĕ хускалмасăр выртнине курчĕ.

Хĕрарăмсен патĕнче лару-тăру хăйне май пулчĕ. Тăлпарпа Кервен пурăнакан çĕрĕсенче вут алхаснине курчĕç хурал тăракансем, çакна çийĕнчех Илеме пĕлтерчĕç. Мĕн пулнине кайса пĕлме вунă çар çыннине ăсатрĕ лешĕ. Кăнтăр тĕлнелле учĕсене çунтарса çитрĕç кайнисем, ют йăхсем вăрçăпа килсе пурне те вĕлерсе пĕтернине, хуралтăсене кĕле çаварнине пĕлтерчĕç. Кăшт тăрарахпа Çӳлти палчă çинче те тĕтĕм палкама пуçларĕ. Ик çĕр ытла вăйпитти хĕрарăмран тăракан утлă çар Акпаттăра пулăшма васкарĕ кун хыççăн. Тăшман хушшине çĕмрен пек килсе кĕчĕç паттăр хĕрарăмсем. Каллех тăкăнчĕ юн. Таптанса çĕрпе хутăшнă тип курăк çинче кӳлленсе кĕвелчĕ. Тăн çаварма та пулмарĕ хурахсене. Йăлмаклă пăявсем ывăтса учĕсем çинчен сĕтĕрсе антарчĕç, касрĕç, чикрĕç вĕсене хĕрарăмсем. Тӳсеймерĕ тăшман, вилнисемпе аманнисене çапăçу хирĕнче хăварса Кан йылга варĕпе вăрман енне чакма пуçларĕ. Юнпа пĕвенчĕ пĕчĕк çырма шывĕ, вилесене пула тĕл-тĕл пĕвеленсе ларчĕ. Тек хирĕç тăраймарĕ тăшман эшкерĕ, чĕрĕ юлнă пĕр вунă çын кăна вăрмана çитсе тарчĕ. Хĕрĕх ытла хĕрарăм пуç хучĕ çак юлашки çапăçура. Хăйсен аманнă-вилнĕ çыннисене пуçтарма хушрĕ Илем, хăй тепĕр виç хĕрарăмпа Çӳлти палча çул тытрĕ.

Чылайччен çӳрерĕç виç çар çынни çапăçу хирĕнче. Хăрушă ӳкерчĕк тухса тăчĕ вĕсен умне. Пур çĕрте те çын вилли, аманнисем йынăшни... Хуçисене çухатнă утсем çаран тăрăх ĕрĕхеççĕ. Сывлăшра кăмăла лĕклентерекен тăкăска юн шăрши тăрать. Хĕвел те юнпа пĕвеннĕ тейĕн. Кĕрхи тӳпене хĕмлентерсе тăлăххăн кашлакан çара вăрман хыçне анать.

Çапăçу хыççăн Ярук каласа панинениепле те шанас килмерĕ Илемĕн. Çук, амантнă пулсан та вĕлерме пултарайман унăн юратнă çыннине. Ăна, ăрури пур çынран патвартарах та вăйлăрах çынна вĕлерме пултаракан хăват та çук. Илем варĕнче хăйĕн ачи ӳснине те пĕлмест-ха Акпаттăр. Хĕрача çураласне шанса пурăнать амăшĕ, ятне те тупса хунă ĕнтĕ. Тем сиксе тухасран хăранипе кăна кун çинчен никама та пĕлтермест. Ахаль те йăрăс пӳллĕ, илемлĕ сăнпитлĕ Илеме йывăрлă пулни татах та чиперлетнĕ пек туйăнать.

Ӳпне ӳкнĕ Акпаттăра тупрĕç хĕрарăмсем, асăрхануллăн çурăмĕ çине çаварса вырттарчĕç. Сăран кĕпине çĕçĕпе касса кăларчĕ Илем, пуçне Акпаттăр кăкăрĕ çине хучĕ.

– Чĕрĕ вăл! Чĕрĕ! Часрах шыв илсе килĕр! – хушрĕ тантăшĕсене.

Лешсем кайсан хăйне хăй алăра тытаймарĕ, кăмăлне ирĕке ячĕ. Пуçне Акпаттăр çине хурса макăрчĕ, хӳхлерĕ. Тумларĕ куççулĕ юнпа пĕвеннĕ кă-

кăр çине. Шыва кайнисем те тавраăнчĕç, Акпаттăр çăварне уçса шыв ячĕç, пуçне йĕпетрĕç.

– Ăçта эпĕ? Кам эсĕ? – тăна кĕрсе ыйтрĕ аманнă çын.

– Эпĕ ку! Эпĕ, санăн Илемӳ! – сивĕ алла кăкăрĕ çумне пăчăртарĕ хĕрарăм.

– Илем? Акă тĕл пултăмăр та. Кил çывăхарах, юлашки хут пăхса юлам, – аллине аран-аран хускатрĕ Акпаттăр.

– Хамах ура çине тăратăп сана. Пĕчĕк ача çитĕнет ман варта. Иксĕмĕрĕн хĕрĕмĕр, Акпаттăр.

– Ярук килет, – пĕлтерчĕç çак самантра хĕрарăмсем.

– Ярук? Ман пата чĕнĕр ăна.

Ача ашшĕ умне пырса тăчĕ.

– Мăйри йăх пуçĕн паллине хывса илсе хăв çине çак, – хушрĕ Акпаттăр. Лешĕ хускалмасăр пуç усса тăнине курсан: – Тӳпене куçма вăхăт çитет, ывăлăм. Ман вырăна эс юлатăн. Вăй-хал пĕтсе килет, каланине итле, – терĕ.

Сăмах чĕнеймерĕ Ярук, пырне капланса килнĕ куççульне çăта-çăта хушнине турĕ. Кăшт выртарахпа каллех куçне уçрĕ ашшĕ, тăракансене вăраххăн пăхса илчĕ:

– Тăшмана çĕнтертĕр-и? Çухату пысăк-и хамăр енчен? Ан пытарăр, тĕрĕсне калăр.

– Тăшмансенчен темиçен кăна тарса хăтăлчĕç. Пирĕн çухату та виç çĕр çын ытла, – пĕлтерчĕ Илем.

– Ах, Тăлпарпа Кервене хамран уйăрса кăларса йăнăш турăм пуль. Пĕрлех пурăннă пулсан, тен, кун пек те пулмĕччĕ. Малашне арçынсемпе хĕрарăмсем те пĕрлех пурăнччăр. Кашниййĕн хăйĕн çемйи пултăр, ачисене пĕрле пăхса ӳстерччĕр. Ăру-несĕле пĕтме ан парăр, – пĕр вăхăт шăпланчĕ Акпаттăр. Кăшт тăн илсен: – Халь Илемпе иксĕмĕре хăварăр-ха, – терĕ вăйсăр сассипе.

Пăрăнса утрĕç хĕрарăмсем. Хуйхă пуснă Ярук та вĕсем хыççăн утрĕ, пĕр вăтăр-хĕрĕх утăмри юман çумне тĕршĕнсе шухăша кайрĕ. Ашшĕне çухатасне шанас килмест унăн. Мĕнле пурăнĕ ăна курмасăр, унăн канашĕсемсĕр? Ашшĕн шанăçне тӳрре кăларайĕ-ши çамрăк йăх пуçĕ? Тĕрлĕ шухăш явăнать Ярукăн вĕриленнĕ пуçĕнче. Хыçĕнче сас илтĕннĕрен çаврăнса пăхрĕ – Çиçĕмпе Кашкăр хăй патне килеççĕ. Йытти ик уран тăрса Ярук питне çуласа илчĕ те ури çумне лăпчăнса выртрĕ, урхамахĕ пуçне хуçин хулпуççийĕ çине хурса тулхăрса илчĕ. Вĕсем те Ярука ăнланаççĕ, шелleççĕ пуль çав. Кăшт вăхăт иртсен хăлхине чăнк! тăратрĕ йытă, унтан Акпаттăрпа Илем юлнă çĕре сикрĕ...

– Ах, Илем! Сана куртăм та, чун-чĕрем савăнăçпа тулса тăкăнать. Çак тĕлпулăва хĕвел тухиччен тăсăттăм – май килмĕ. Шăпамăрсем çаплах ăраскалсăр пулчĕç-шим? – тет хурланса Акпаттăр. Хăй çумне чăмăртаса чуптăвĕччĕ савнине – аллисем итлемеççĕ. Кевти те хăйĕн пек мар.

– Каятăнах пулсан мана та илсе кай! Пурпĕр сансăр пурăнаяс çук. Хĕвел

сӳнсен уйăх та пулмĕ. Кăвайт тĕнчене çутатса ăшăтаяс çук, – тет Илем Акпаттăра ыталаса.

– Эс çамрăк-ха. Пĕр-пĕр арпа пĕрлешсе йăва çавăр. Ачăрсем умранхыçран чупса çӳресе савăнтарччăр. Ярука пăхса-асăрхасах тăр. Çамрăк-ха вăл. Ах, юлашки хут чуптуса ăшăтсамччĕ. Сивĕ мана...

– Кирлĕ мар мана никам та. Ылтăн çумĕнче выртакан чул ылтăна пурпĕрех çаврăнаймĕ. Санăн тĕк-мамăк пек çемçе, пылран пылак чĕлхӳ-çăварупа хĕвел пек ăшшуна активнĕ хыççăн ют арçын çине пăхаймăп, – Акпаттăрăн сивĕ тутипе пĕрлешет Илемĕн кăвар тути.

Хурлăн сывпуллашса уйрăлать ик чун. Иккĕшне ик енне уйăрать шăпа. Çав уйăракан çыр тарăнланса-анлăлансах пырать, тĕпсĕр вара çаврăнать. Илемĕн вут тути те, хăй çинчен хывса витнĕ сăран кĕпе те текех ăшăтаймарĕç юнсăр юлнă Акпаттăрăн кевтине. Юратнă çыннин ытамĕнчех тĕнчерен уйрăлчĕ арçын. Сассăр ĕсĕклесе хӳхлерĕ пĕччен юлнă хĕрарăм. Тӳпене ярăнса тухнă тулли уйăх курчĕ çакна, тата инçе мар выртакан тепĕр çын...

Ури çине тăчĕ Илем, кĕпе вĕççĕн кăна пулсан та сивве туймарĕ. Пуçне ик аллипе тытса пăхрĕ те пăхрĕ Акпаттăр çине. Çак самантра сулахай енчи кăкăрĕ вут пек пĕçерсе кайрĕ. Кĕтмен çĕртен пулнипе ним те ăнланаймарĕ, ыратнине тӳсеймесĕр кукленсе ларчĕ. Хăйĕнчен тăват-пилĕк утăмра хăяккăн выртакан çын тепре пеме хатĕрленсе ухă кантрине карăнтарнине, çак вăхăтра ун çине йытă харлатса сикнине кăна курса юлма ĕлкĕрчĕ. "Акă каллех тĕл пулатпăр. Пĕр-пĕринсĕр пурăнма май çук пирĕншĕн", – пулчĕ юлашки шухăшĕ Акпаттăр кăкăрĕ çине каллех пуçне хунă май.

Ярук чупса çитнĕ вăхăтра Кашкăр хайхи çыннăн карланкине çыртса та лартнăччĕ ĕнтĕ. Тăшмана асăрхаса юлайманшăн хăйне хăй ӳпкелерĕ ача. Аманнипе тăнсăр пулса выртнă пулнă-ши лешĕ, е тĕттĕмленсен çапăçу хирĕнчен тарасшăн пулнă? – ку уншăн паллă пулмарĕ. Хăйне çывăх çынсен умĕнче мĕн чул тăнине хăй те пĕлмерĕ Ярук, тăна кĕнĕ пек пулсан такăнатакăна тĕлли-паллисĕр утрĕ.

Иртрĕç юнпа пĕвеннĕ кунпа çĕр. Ирхине вĕтĕ çумăр вĕсхесе иртрĕ. Тӳпене лаппипех тăхлан тĕслĕ йывăр пĕлĕт карса илчĕ. Таврара шăплăх. Хĕл умĕнхи тăнăçлăхра çутçанталăк. Чĕрĕ юлнă çынсемшĕн кăна канăç-тăнăçлăх çук. Вăтăр ытла çын Тăлпарпа Кервен тапăрĕсене йăх çыннисен вилĕ ӳчĕсене, юлнă пек тупрана тиесе килме лавсемпе кайрĕç. Юлнисем те вилнисене пуçтарма тытăнчĕç, çĕр пӳртсене рете кĕртеççĕ. Çĕр пӳртсен умĕнчи чĕртнĕ кăвайтсенче апат пиçет. Тепĕр çирĕм çынна Йĕкĕр ту патне чул кăларма ячĕç. Чулĕсене кăларнă çĕртех чутласа илсе килмелле. Тăшман виллисене пуçтарса Кызыл яр варне пăрахрĕç, хăйсенне – Кызыр пӳлекри вăрман уçланкине леçрĕç, тискер кайăксем тапăнасран кĕççесемпе витсе хурал тăратрĕç. Акпаттăрпа Илем ӳчĕсене вăхăтлăха çĕр пӳрте вырнаçтарнă. Вĕсене пĕрле пытарма канаш тытнă. Йĕкĕрту çине кайнисем чул

илсе килессе кӑна кӗтеҫҫӗ. Кӑнтӑрла тӗлне Тӑлпарпа Кервен ҫыннисене тиесе килчӗҫ. Каллех хӳхлесе макӑрчӗҫ хӗрарӑмсем, арҫынсем сӑмах чӗнмесӗр пуҫ усса тӑчӗҫ. Пӗрлехи хуйхӑ пурне те чул пек пусса лартрӗ. Ярука та йывӑр тивӗччӗ Тевет пулмасан. Ӑшӑ сӑмахпа лӑплантарма тӑрӑшрӗ хӗр хӑй тӑванне, тӗрлӗ канашпа пулӑшрӗ. Акпаттӑрпа Илеме пӗрле пытарма сӗнекенни те Теветех пулчӗ. "Малашне арҫынсемпе хӗрарӑмсем пӗрле пурӑнассине пӗлтерекен паллӑ пултӑр ҫакӑ", – терӗ хӗр.

Ҫапӑҫу хыҫҫӑн виҫҫӗмӗш кун кайсан вилнисене пытарма тытӑнчӗҫ. Кызыр пӳлекри тӳпем ҫине ҫума-ҫумӑн вырттарнӑскерсене сӑран татӑкӗсемпе витрӗҫ, ултӑ кун хушши ҫӗр йӑтса ҫиеле купаларӗҫ. Акпаттӑрпа Илеме уйрӑм тӳпем ҫинче пытарчӗҫ. Яланлӑх вырӑн тупнисене выртма канлӗ пултӑр тесе айккисене акшар чул купаласа хӑпартрӗҫ, ҫиеле те чул плита витсе ҫӗр купаларӗҫ.

Хӗл ларчӗ. Шартлама сивӗсем ҫитрӗҫ. Вӑхӑт кӗске пулсан та, хӗле кирлӗ пек хатӗрленсе ӗлкӗрчӗҫ йӑх ҫыннисем. Ҫӗнӗ ҫӗр пӳртсем чавса лартнӑ, киввисене юсаса ҫӗнетнӗ. Выльӑх-чӗрлӗх ӑшӑ витесенче. Юрать-ха, хирӗҫ тӑру вӑхӑтӗнче утӑ сыхланса юлнӑ. Арҫынсем кивӗ ҫӗр пӳртсенче, хӗрарӑмсем ҫӗннисенче тӗпленсе пурӑнаҫҫӗ пулсан та, хуҫалӑха пӗрле тытаҫҫӗ. Вӑйпитти ҫынсенчен ытларахӑшӗ сунара ҫӳрет, ача-пӑча – выльӑх патӗнче. Ярук та пушӑ вӑхӑтра сунарта, хӑш чух вара кунӗ-кунӗпе ҫӗр пӳртрен тухмасӑр ларать. Малашнехи пурнӑҫ канӑҫсӑрлантарать ҫамрӑк йӑх пуҫне. Кӗркуннеренпе лару-тӑру лӑпкӑ-ха, пурпӗр сисет Ярук: ют йӑхсем тепре килсе тапӑнма та пултараҫҫӗ. Ҫавӑнпа ашшӗ асӑннӑ тухӑҫ енчи пуш ҫӗрсене ҫитсе курма ӗмӗтленет.

Акӑ каллех ҫуркунне ҫитрӗ. Шыв-шур типрӗ, ҫутҫанталӑк ешерет, кӑнтӑрти кайӑксем те таврӑннӑ. Вӑрман вӗсен сассипе янрать. Чӗкеҫсем ҫӗр пӳртсен ҫийӗнче йӑр-яр! вӗҫеҫҫӗ, хуралтӑсен ҫумне йӑвисене ҫыпӑҫтарма пуҫланӑ та, тӑмпа тип курӑк йӑтаҫҫӗ. Пур ҫӗрте те чӗрӗлӗх. Пурнӑҫ малаллах сыпӑнса пырать чӗррисемшӗн.

Ҫирӗм юланутҫӑ ҫула пуҫтарӑнчӗҫ пӗр ирхине. Ҫителӗклӗ таран апатҫимӗҫ илчӗҫ хӑйсемпе, ҫар тумӗ тӑхӑнчӗҫ. Кайрӗҫ тухӑҫ енчи ҫӗрсене пӑхма. Ярук хӑй ертсе пычӗ вӗсене. Эрне хушшинче ҫитес ҫӗре ҫитсе-ҫаврӑнса килчӗҫ, тухӑҫ енчи ҫӗр ту-сӑртлӑ пулсан та пуян пулнине пӗлтерчӗҫ. Тепӗр эрнерен Ярук ертсе пыракан йӑх ҫав енне куҫса кайрӗ.

Тӑлӑххӑн курӑнчӗҫ хуҫисемсӗр тӑрса юлнӑ ҫӗр пӳртсемпе выльӑх витисем. Юлчӗҫ тата Акпаттӑрпа Илеме, ытти йӑх ҫыннисене пытарнӑ ҫӗр тӗмисем. Вӑрман салхуллӑн кашласа ӑсатрӗ куҫса каякансене.

## VII. Вун ҫичӗ ҫул иртсен

Ҫу хыҫҫӑн – ҫу, хӗл хыҫҫӑн хӗл иртрӗ унтанпа. Тӗплӗн вырнаҫрӗҫ ҫӗнӗ ҫӗрте йӑх ҫыннисем. Ҫитӗннисем арлӑ-арӑмлӑ, ача-пӑчаллӑ – уйрӑм ҫӗр

пӳртсенче пурăнаççĕ. Тӳшлĕ выльăх-чĕрлĕхĕн шучĕ çук. Тусен хушшинчи улăхсенче çын курăнми ӳснĕ курăка ашса çӳреççĕ. Вăрманта – тискер кайăк, юханшывсенче – пулă иксĕлми. Чи пахи – çĕр ирĕкки, çумлăн ют йăхсем пулманни. Çĕрпе пурлăхшăн хирĕç тăмалла мар, йăх чиккисене хураллама та сăлтав çук. Çар тумне улшу-илӳ ĕçĕпе ют çĕрсене çӳренĕ чух кăна тăхăнаççĕ. Хĕрарăмсен тĕп ĕçĕ те халь – арçынсене хуçалăха тытса пыма пулăшасси, ача çуратса ӳстересси.

Ярук та тахçанах çемьеллĕ. Аслă ывăлĕ хăйне çитсе пырать, кĕçĕнни те тахçантанпах тĕрлĕ ĕçре пулăшать. Мăшăрĕ – Хевте – ĕçре правур, чипер сăн-питлĕ хĕрарăм. Çĕр пӳрчĕ йĕркеллĕ, килтисем таса та питĕ çӳреççĕ. Кăмăллă хăйĕн мăшăрĕпе Ярук. Теветĕн те хăй çемйи. Ик ывăлĕпе хĕрĕ ӳссе çитнĕ, мăшăрĕ ăрури чи ăста сунарçăсен шутĕнче.

Пушă вăхăтра Ярук час-часах пĕр пушă çĕр пӳрте хупăнса ларать. Мĕн тăвать вăл унта? – никам та пĕлмест. Кунĕпех шалта тем шаккани илтĕнет, хăш чух апатланма та унтан тухмасть. Мăшăрĕ мĕн тунине пĕр Хевте кăна тавçăрать...

Çуллахи уяр ирпе вăтăр юланутçă тата ик тиевлĕ лав анăç енне çул тытрĕç. Пĕр лавĕ çине кĕççепе чĕркесе хунă çăкĕ самай йывăрскер, тусăртлă вырăнсенче ура тапса туртаççĕ пар лашасем. Иккĕмĕшĕ çинче çыхса пăрахнă виç сурăх выртаççĕ. Каç енне çитес çĕре çитрĕç, çĕрсе лăпчăннă çĕр пӳртсем умĕнче чарăнчĕç.

Ярукпа çумлăн патвар кевтеллĕ ик çамрăк тăраççĕ.

– Акпаттăр, эс сурăхсене пусса апат пĕçерессине йĕркеле. Эсĕ, Кервен, ыттисемпе шыв йăтса вут хатĕрлĕр. Эп тавралăха пăхса çаврăнам-ха, – терĕ Ярук.

Ним те улшăнман пек Çӳлти палчăра вун çичĕ çул хушшинче. Кунта нумай çул хушши çын ури ярса пусманни кăна пур çĕрте те сисĕнет. Хирĕç тăру вăхăтĕнче вилнисене пытарнă тӳпемсем те çеремленсе курăкпа витĕннĕ. Ку вырăнсенче хаяр çапăçусем пынине халь ним те аса илтермест. Суранĕсене сипленĕ çĕр. Чĕрĕ юлнисен асĕнче юлнă сурана кăна вăхăт сиплеймест. Аса илтерсех тăрать вăл.

Ашшĕ-амăшне пытарнă тӳпем умне çитрĕ Ярук, вăрахчен шухăша кайса тăчĕ. Пулни-иртни хăрушă тĕлĕк пек туйăнчĕ ăна халь. Хăй те ашшĕн çулне çитнĕ ĕнтĕ вăл. Сăнĕпе те, кевтипе те ăнах хунă. Акпаттăр вилмен, Ярука кăна куçнă тейĕн. Аслă ывăлĕ çуралсан Акпаттăр ят хучĕç, кĕçĕннине – Кервен. Мăшăрĕ каллех йывăрлă-ха. Ывăл çуралсан Тăлпар ят парасшăн Ярук, пиччĕшĕсен ячĕсене асăнмалăх  хăварма картса хунăскер. Ашшĕ тимĕр шăратма вĕрентни те харама каймарĕ. Çĕнĕ çĕрти шурлăх тăпри тимĕрпе пуян пулчĕ, çавна май тимĕр шăратассине каллех йĕркелерĕ Ярук. Кăмакисене унчченхи пек уçă тӳпе айĕнче мар, ирĕк те тарăн çĕр пӳртсенче вырнаçтарчĕç. Халь çулталăк тăршшĕпех тимĕр шăратаççĕ ăстасем. Унран

тĕрлĕ савăт-сапапа çĕр хатĕрĕ тăваççĕ. Тимĕре хĕртсе çирĕплетме те вĕренсе çитнĕ вĕсем. Улшу-илӳ çӳллĕ шайра. Хăйсем патне суту-илӳçĕсем килсе çӳреççĕ, Ярук çыннисем те ют çĕрсене тулли лавсемпе кайса килеççĕ. Ярукпа утмăл çын темиçе кун каярах кăна кăнтăр енчен таврăнчĕç. Улшу-илӳпе кăмăллă юлчĕç йăх çыннисем. Кăнтăр енчи çĕрсене тепĕр япала та туртать Ярука. Çынсемпе тĕрлĕ чĕрчунсен кĕлеткисене йывăçран касса ăсталама пĕчĕк чухнех ăстаччĕ вăл. Кăнтăр енне кайса çӳренĕ хушăра вĕсене чулран касса кăларма вĕренчĕ, пушă çĕр пӳртре хупăнса ларса ĕçленин сăлтавĕ те çавă пулчĕ.

Ик хуранра сурăх ашĕ пиçрĕ. "Асăнса çиме вăхăт", – терĕç арçынсем хурансене вут çинчен илсе çĕре лартсан. Лав çинчи кĕççепе чĕркесе çыхнă çăка та антарса салтрĕç. Килнисен умне чулран касса кăларнă хĕрарăм кӳлепи тухса тăчĕ. "Каснă-лартнă Илем", – терĕç тĕлĕнсе астăвакансем. Тăваттăн тăват енчен йăтса Акпаттăрпа Илеме пытарнă тӳпе патне утрĕç, чул кӳлепене вилтăприн варрине çĕр чавса тăратса лартрĕç, айккисене акшар чул пуçтарса купаларĕç.

– Çапăçусенче пуç хунисене асăнмалли паллă пултăр çакă. Малашне никамăн та вăрçă нушине курмалла ан пултăр. Кашниех хăй çемйипе ытлăн-çитлĕн пурăнса ачисене ӳстертĕр, йăх йышĕпе пуянлăхне хуштăр, – терĕ Ярук.

Хурансем патне таврăнчĕç арçынсем. Вилнисене асăнса апатланчĕç, юлнă шăмăсене виле тӳписем çине кайса хучĕç. "Пирĕн пек тутă пулăр, хĕн-хур ан ярăр, йăхри çынсемпе выльăх-чĕрлĕхе чир-чĕртен упрăр", – терĕç. Уçă тӳпе айĕнчех çĕр каçнă хыççăн çутăлнă-çутăлманах пуçтарăнса çула тухрĕç.

Каллех пушанса юлчĕ тавралăх. Чул кĕлетке кăна, вилнисен тăнăçлăхне сыхлакан пĕччен хуралçă пек, тӳпем çинче тăрса юлчĕ.

## Юлашкинчен калани

– Çакăн пек хурлăхлă легенда упранса юлнă халăхра, – тет Исаак Иванч калавне вĕçлесе. – Мĕн авалтанах легендăра асăннă çапăçусем пынă вырăна Каран йылга – сăваплă вар теççĕ. Вăрмана çити хăваланă çырмана Кан йылга – Юн çырми, тăшман виллисене пăрахнă вара – Кызыл яр – Хĕрлĕ çыр. Мăклă кӳлĕрен инçе мар – Ярук-Матви варĕнче, хĕрарăмсем пурăннă вырăнта, шкул ачисем Ама çын (Амазонка) статуэткипе вĕсен ертӳçин паллине тупрĕç. Сарматсен кун пек япалисене археологсем ик çĕрте кăна тупнă. Çак япаласем хамăр музейрах упранаççĕ. Кун çинчен пĕлсен ятлă-сумлă музейсен ĕçченĕсем темиçешер хут та килсе кайрĕç. Пурте çак экспонатсене хăйсен аллине илесшĕн пулчĕç. Акă Мăклă кулкка патĕнчи тимĕр шăратнă çĕре чавсан тупнă япаласем: тăмран тунă пăрахпа кирпĕч татăкĕсем, йывăç кăмрăкĕ. Тимĕр муклашки те пур. Тем сăлтава пула таса тимĕрех çаврăнайман

çав вăл, – стендсене уçса экспонатсемпе паллаштарать музей хуçи.

Пин çурă çул каярахри япаласене хумханса, асăрханullăн тытатăп, хура чулран ăсталанă Тăрачула аллăмпа сĕртĕнетĕп.

– Ма Тăрачул теççĕ ăна? – тӳсейместĕп ыйтмасăр.

– Ку ятăн та хăй ăнлантарăвĕ пур, – хавхаланса калаçать Исаак Иванч. – Пĕр вăхăтра уйсенче акмалли çĕрсене анлăлатма пуçларĕç. Тăрачуллă тĕмене те тикĕслеме шут тытнă. Тракторпа сĕтĕрсе пĕрре мар вăрман хĕрне кăларнă чăрмантаракан чула. Тепре килсен пăхаççĕ – каллех вырăнĕнче ларать лешĕ. Мĕнле майпа каллех унта лекнĕ? – никам та пĕлмест.

Çапла, çак Тăрачул тĕме çинче ларнине те, вăрман хĕрринче выртнине те сахал мар курнă хам пĕчĕк чухне. Пире, ача-пăчана, ваттисем кашнинчех: "Тăрачула ан тивĕр. Тем курасси пулĕ тата", – тетчĕç. Паллах, эпир ун çывăхне пырсан та алăпа тĕкĕнме хăйман. Асамлă япала пек туйăннă вăл пирĕншĕн. Асамлăхĕ вара чăнласах пур унăн. Кăна ахальтен каламастăп-ха.

Сосновка паççулккинче пурăнакан Кăртти Çеркейĕ Тăрачулпа хăйне май усăланма шут тытнă. Мунча чулĕ вырăнне хума пит меллĕ пек туйăннă вăл ăна. Тракторĕнчен кăкарса килне сĕтĕрсе таврăнать хайхине. Шутланă – тунă. Акă шăмат кун мунча хутаççĕ хайхисем. Хăй ăнкаруллă пулнăшăн савăннă Кăртти çемйипех мунча кĕрет. Темиçе кунранах арăмĕпе иккĕш тата вĕт-шакăр пилĕк ачи кĕсен-çăпан пек япалапа чирлеме пуçлаççĕ. Мĕнле чир иккенне тухтăрсем те татăклăн калайман. Тирĕсем çĕтĕлсе пĕтичченех хыçаланаççĕ. Шалт аптăраççĕ хайхисем. Пĕр кунхине çаксем патне урам урлă пурăнакан Шӳтек Хĕветĕрĕ каçать. Кусем хăйсен терт-нуши çинчен каласа параççĕ çакна.

– Мĕнрен пуçланчĕ вара ку эккемет? – кăсăкланать хайхи.

Лешсем каланине тимлĕн итлет те лешĕ, мунчана кайса пăхма шутлать. Кил хуçипе мунчана кĕрсен кăмака çинче Тăрачул выртнине курах каять хайхи.

– Кăна мунча кăмаки çине хума епле ăс çитрĕ санăн? – вăрçăнма тытăнать ват çын.

– Капмарскертен ăшши аванрах пулĕ тесеччĕ. Пурпĕр усăсăр ларать, – тӳрре тухма пăхать лешĕ.

– Ăна эс ăсталаса лартман. Апла пулсан унран капла мăшкăллама санăн ирĕк те çук. Тавай, кăмака çинчен ил те çуса тасатса вырăнне кайса ларт! Вырăнне çитерсен каçару ыйтма ан ман. Ун чух, муш, чир-чĕрĕртен те сывалăр, – сурса-вăрçăнса тухса каять Шӳтек Хĕветĕрĕ.

Сехри хăпнă Кăртти Çеркейĕ çав кунхинех лаша кӳлет те çуса тасатнă тăрачула урапи çине хурса вырăнне леçет, чĕркуçленсе ларсах каçару ыйтать. Кун хыççăн тин хăпать хайхи чунилли чир. Çынсем каланă тăрăх, Кăртти Çеркейĕ урăхран çак тăрачула тивме мар, çывăхĕнчен иртсе çӳреме те хăранă. Ку – халăхра çӳрекен легенда мар, чăнласах пулнă япала. "Тăрачу-

ла музее илсе килмелле", – шут тытать пĕррехинче Исаак Иванч. Павлик ывăлĕпе машинăпа илсе килсе музее вырнаçтараççĕ ăна пĕррехинче.

– Тăрачул тесе ахальтен ят паман ăна. Тĕме çинчи пекех тăратса хумалли истори экспоначĕ вăл. Çавна шута илсе уйрăм стенд йĕркелерĕмĕр. Ама çынсен ертÿçин палли те Илемĕнех пулнă пулас. Легендăна ĕненсен, кунта урăхран сармат йăхĕсем пурăнман, маларах çухатма та пултарайман ăна. Мĕншĕн тесен вăл ертÿçĕрен ертÿçе куçса пынă. Илем вилнĕ хыççăн хĕрарăмсем арçынсемпе пĕрле пурăннă. Апла пулсан хăй вăйне çухатнă çак паллă, кирлĕ мар пулса юлнă. Апла мĕншĕн хуçипе пытарман ăна? Тен, темле йăла-йĕркене пула хăй пурăннă çĕрех хурса хăварнă? Кун пирки халь каласа пулмасть. Хăш-пĕр тĕпчевçĕсем сарматсене вырăнтан вырăна куçса çÿренĕ халăхсен шутне кĕртеççĕ. Ку тĕпрен тĕрĕс мар. Тимĕр шăратма пĕлсе, улшу-илÿ ĕçĕпе пурăннă халăх – пĕр çĕртех тĕпленсе пурăннă, – вĕçлет сăмахне Исаак Иванч.

Апла-и, капла-и, çавах çÿлерех каласа панă ĕçсем чăнласах пулнине шанас килет. Легенда та пиншер çул хушши халăх астăвăмĕпе пурăнать. Апла пулсан унра тĕрĕсси те пурах.



*Микул Ишимбай (Николай Демьянович Иванов) прозаик, поэт 1952 çулхи çу уйăхĕн 22-мĕшĕнче Пушкăрт Республикинчи Аургаза районĕнчи Дадановка ялĕнче çуралнă. Меселпуçĕнчи вăтам шкулта вĕреннĕ. Челябинскри политехника институтĕнче аслă пĕлÿ илнĕ, Çтерлĕ хулинчи химии заводĕнче, хаçатра ĕçленĕ.*

*"Тăван Атăл", "Ялав", "Капкăн" журналсенче, "Урал сасси" хаçатра тăтăш пичетленет. Пурнăçа авторĕ лайăх пĕлнĕ май унăн геройĕсем ĕненмелле те илĕртÿллĕ пулса тухаççĕ, вĕсемпе пĕрле хытă савăнатăн та, кулянатăн та. Унăн "Çын чысĕ", "Вата ăшши", "Салам, тăван ялăм", "Шурăмпуç пики", "Ачалăхран çитнĕ ахрăм", "Ĕмĕт" т.ыт. кĕнекисем тухнă.*